Пĕр №-рĕ 10 пус — 19-мĕш çул тухать

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 октябĕр 30 ШАМАТКУН 250 (4762)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Аслă Совета—совет халăхĕн чи лайăх ывăлĕсене

Суйлав кампанийĕ кунран кун сарăлса пырса, халăх массисене вĕрессе тăракан политикăлă пурнăçа ытларах та ытларах йавăçтарать. Рабочисен, колхозниксен, служăщчисен, инженерла-техникла работниксен суйлав умĕнхи пухувĕсем çĕкленÿлĕн те хастаррăн иртеççĕ.

Рабочи коллективĕсен тата колхозниксен суйлав умĕнхи пухувĕсем Горький суйлав округĕ тăрăх Националънăçсен Советне депутата суйлама Сталин йулташ кандидатурипе Чкалов йулташ кандидатурине палартрĕç. Нумай суйлав округĕсем çывăхран та çывăх йулташа, халăхсен çулпуçне, аслă Сталина ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртаççĕ. Ку ĕнтĕ Совет Сойузĕнчи халăхсем хăйсен тăван партине, хăйсен тăван çулпуçне вĕçĕ-хĕррисĕр йуратнине кăтартса паракан хăватлă демонстраци пулса тăрать.

Пурте пĕлеççĕ, суйлав саккунĕ тăрăх пĕр округран пĕр çын кăна депутата суйланма пултарать. Сталин йулташ хăш суйлав округĕнчен суйланасси вăл хăй хăш округа баллотировкăна тăма килĕшÿ панинчен килет. Анчах кирек те мĕнле пулсан та, кирек те хăш округран суйлансан та Сталин йулташ пĕтĕм совет халăхĕн депутачĕ пулать. Пĕтĕм совет халăхĕ Сталин йулташшăн сасăлать.

Висĕмкунран пуçласа Чăваш республикĕнчи суйлав округĕсем тăрах ССР Сойузĕн Сойуз Советне тата Националънăçсен Советне суйламали кандидатсене палăртма тытăнчĕç. Октябĕрĕн 28-мĕшĕнче Йетĕрнери çу çапакан заводра, Куславкка комбинатĕнче, Шупашкарти типографипе тир-сăран заводĕнче, çавăн пекех тата хăшпĕр колхозсенче суйлав умĕнхи пĕрлехи пухусем пулса иртрĕç.

Куславкка комбинатĕнче ĕçлекен рабочисен, служащчисен тата инженерла-техникла работниксен пĕрлехи пухувĕ Çĕмĕрле суйлав округĕ тăрăх Сойуз Советне депутата суйлама Сталин йулташăн чи çывăх соратникне, совет Правителствин руководителне—Вйачеслав Михайлович Молотова палăртать. Молотов йулташ рабочи клас ĕçĕшĕн патша тĕрмисенче ларнă, ссылкăра пулнă. Вăл Ленинпа пĕрле, Сталинпа пĕрле пирĕн партийе туса çирĕплетессишĕн хăйне хăй шеллемесĕр кĕрешнĕ. Вăл Сталин йулташпа пĕрле совет халăхĕсен телейлĕ пурнăçĕшĕн, коммунисăм ĕçĕшĕн ывăннине пĕлмесĕр кĕрешет. Чăваш халăхĕ Куславкка комбинатĕнчи рабочисене саламласа, Молотов йулташăн кандидатурине пĕтĕм чĕререн хапăлласа йышăнать.

Шупашкарти типографипе тирсăран завочĕ Ишлей районĕнчи „Клевер" колхоз Шупашкар суйлав округĕнчен Националънăçсен Советне депутата суйлама Алексей Иванович Стецкий йулташăн кандидатурине палăртаççĕ. Стецкий йулташ ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн партилĕ пропагандăпа агитаци пайне йертсе пырать. Вăл партири болъшевиксене тата партире тăман болъшевиксене марксисăм-ленинисăм теорипе хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе ĕçлет. Вăл марксисăмăн револъуцилĕ теорине малала пуйанлатас ĕçе сахал мар вăй хунă, хурать те. Стецкий йулташ—Сталин йулташăн çывăх помошникĕ.

Типографире ĕçлекен рабочисен, служăщчисен, инженерла-техникла работниксен тата пичет работникĕсен пĕрлехи пухувĕнче ватă рабочи Круглов Стецкий йулташ çинчен кĕскен те тĕрĕс çапла каларĕ:

— Кунта Националънăçсен Советне депутата суйлама Алексей Иванович Стецкий йулташ кандидатне сĕнчĕç. Епĕ ку кандидатурăна пĕтĕм чĕререн хапăллатăп. Алексей Иванович пирĕншĕн, типографипе редакцисенче ĕçлекенсемшĕн, уйрăмах çывăх. Стецкий йулташ пичет çурчĕ туса лартма пулăшрĕ. Вăл тăрăшнипе мĕлйун-мĕлйун ĕççыннисем марксисăм-ленинисăм теорипе хĕçпăшалланаççĕ.

Йетĕрнери çу çапакан заводра ĕçлекен рабочисен, служăщчисен тата инженерла-техникла работниксен пĕрлехи пухувĕ Çĕмĕрле суйлав округĕ тăрăх Сойуз Советне депутата суйлама „Крестьянская газета" колхоз председателне Краснов орденоносеца палăртать.

Краснов Андрей Михайлович ватă мар. Анчах вăл клас кĕрешÿвĕнче писнĕ çын. Вăл чи вирлĕ вăхăтра йалсовет председателĕ, тырпул хатĕрлев комиççин председателĕ, колхоз организатăрĕ пулса ĕçлет. Кулаксене хирĕç хăйаррăн кĕрешет. Урса кайнă кулаксем хăйсен çиллине шăнараймасăр Красновсен çуртне вут тивертсе çунтарса йараççĕ.

1934 çултанпа Краснов йулташ „Крестьянская газета" колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Кăтартулă ĕçленĕшĕн, тырпул тухăçне тăтăшах хăпартса пынăшăн ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ ăна 1935 çулта Хĕрлĕ ĕçйалав Орденĕпе наградăланă. Иртнĕ çулта çанталак типĕ те шăрăх тăнă пулин те Андрей Михайлович Краснов йертсе пыракан колхоз гектар пуçне 15,8 центнер тĕштырă туса илнĕ. Колхоз кÿршĕ колхозсене сахал мар пулăшу пана Паллах, иртнĕ çулта пулăшу организацилесси çăмăл ĕç пулман. Çирĕп организатăр кирлĕ пулнă. Краснов йулташ шăпах çавăн пек организатăр пулса тăрать.

Шупашкар районĕнчи „Осоавиахим" колхоз Сойуз Советне депутата суйлама Марийа Михайловна Сахйанова кандидатурине палăртать. Сахйанова йулташ ПСК(б)П Тĕпкомĕ çумĕнчи Партилĕ Контролъ Комиççин Чăваш республикĕнчи Уполномоченнăйĕ. Вăл Чăваш республикĕнче нумай ĕçлемест пулин те, ăна пурте пĕлеççĕ. Вăл кĕске срукрах республикăшăн нумай ĕç туни пуриншĕн те паллă."

Чăваш халăхĕ государствă влаçĕн чи аслă оргăнне депутата суйлама хăйĕн кандидачĕсене тăратать. Çав пархатарлă ĕçе кашнийех пысăк шухăш-кăмăлпа тăвать—Аслă Совета чи лайăххисенчен лайăххисене, чи шанчăклисенчен шанчăклисене суйлама тăрăшать.

Урăхла пулма та пултараймасть. ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕсен, халăх чи пысăк шанăç хунă çынсен, ытти государствăсемпе договорсем туса вĕсене çирĕплетмелле, вăрçăпа мир ыйтувĕсене татса памала, Конституцийе пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тăмала, социалисăм строителствин планĕсене тумала, çĕнĕ саккунсем кăлармала пулать. Çавăн пек пысăк та аслă ĕçсене халăх хăйĕн чи лайăх ывăлĕ-хĕрĕсене çеç шанса пама пултарать. Çавăнпа та ĕнтĕ ССР Сойузĕн Аслă Советне депутатсем суйласси политикăлă событи, мĕн пур граждăнсен интересĕсене, пĕтĕм государствă ĕçне пырса тивекен пысăкран та пысăк ĕç пулса тăрать.

Рабочисем, колхозниксем, служăшчисем Сойуз Совечĕпе Националънăçсен Совечĕн депутачĕсене суйлама çĕршывăн чи лайăх çыннисен кандидатурисене тăратаççĕ

* * *

КУСЛАВККА КОМБИНАЧĔ

Куславкка комбинатĕнчи рабочисем, инженерсем, техниксем, служăшчисем тата килхуçи хĕрарăмĕсем Националънăçсен Советне депутата суйлама

Вйачеслав Михайлович Молотова

тата Сойуз Советне депутата суйлама

Йевдокийа Петровна Цыгановăна

палăртнă

Куславкка комбинатĕнчи рабочисемпе работницăсен, инженерсемпе техниксен, служăшчисемпе килхуçи хĕрарăмесен суйлав умĕнхи пĕрлехи пухувĕ йышăннă резолъуцирен

Епĕр, Куславкка комбинатĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем, служăшчисемпе килхуçи хĕрарăмĕсем, Сойуз Советне тата Националънăçсен Советне депутатсем суйлама кандидатсем тăратма пухăнса хамăрăн малтанхи сăмаха: хăйĕн пĕтĕм ирĕкне, хăйĕн пĕтĕм вăйне Ленин—Сталин партийĕн ĕçне паракан, Маркс—Енгелъс—Ленин йалавне, коммунисăмăн çĕнтерÿлĕ йалавне çÿле çĕклесе пыракан халăхсен çулпуçĕпе учителне, социалисăм çĕнтерĕвĕн организатăрне, тĕнчери чи демократилĕ Конституцийе тăвакана, халăхсен телейлĕхĕшĕн, хамăр çĕршывăн ăнăçлăхĕшĕн ырми-канми тăрăшса ĕçлекен Иосиф Виссарионович Сталин йулташа паратпăр.

Националънăçсен Советне депутата суйлама епĕр—Сталин йулташăн чи лайăх ученикне, соратникне, совет Правителствин пуçлăхне—Вйачеслав Михайловича Молотова сĕнетпĕр.

Сойуз Советне депутата суйлама — хăма çуракан цехри чи лайăх стахановкăна тата общĕственницăна — Йевдокийа Петровнă Цыгановăна сĕнетпĕр.

Молотов йулташран Националънăçсен Советне депутата суйланма Вăрмар суйлав округĕнчен баллотировкăна тăма килĕшме тата Цыгановă йулташран Сойуз Советне депутата суйланма Канаш суйлав округĕнчен баллотировкăна тăма килĕшме ыйтатпăр.

Епĕр Аслă Совета Совет правителствишĕн пĕтĕм вăйне парса ĕçлекен çынсене уйăрса, хамăр йенчен производствăри ĕçе тата лайăххрах организацилеме, халăх тăшманĕсене— троцкисла-зиновйевла ирсĕр кайашлăхсен йулашкисене хирĕç ырми-канми кĕрешсе пыма пулатпăр.

Сывă пултăр Сталинла Конституци!

Сывă пултăр ПСК(б)П—ССР Сойузĕнчи ĕççыннисен малта пыракан отрйачĕ!

Сывă пултăр Сталин йулташ!

ШУПАШКАР РАЙОНĔ

„Осоавиахим" колхоз колхозникĕсем

Марийа Михайловна Сахйановăна

Националънăçсен Советне депутата суйлама кандидата палăртрĕç

Колхозниксем колхоз клубĕ йенеле утма пуçларĕç. Пайанхи кун пăчах урăхла. Çамрăксен, хĕрарăмсен, стариксен клуба пынă чухне те, клубра ларнă чухне те пайанхи пулас пуху çинчен калаçу пулчĕ.

Çынсем пухăнса çитрĕç. Пухува колхоз председателĕ Н. С. Хабаров йулташ уçрĕ.

Кун йĕркинче пĕр ыйту — Шупашкар йал суйлав округĕнчен Националънăçсен Советне депутата суйлама кандидат тăратасси.

Пухура 5 çын тухса калаçрĕç. Вĕсем пурте асаплăхран, чуралăхран тухса, çутă та телейлĕ пурнăç туни çинчен чарăнса тăчĕç. Кашни тухса калаçакан çын ку телейлĕ пурнăçа туса панă Сталин йатне хаваслăн асăнать. Ăна сывлăх, ырлăх сунать. Кашни тухса калаçакан çын чуралăха ылханса илет.

Пуху пĕр сасăпа Националънăçсен Советне депутата суйлама Сахйанова Марийа Михайловнăна кандидата тăратма йышăнчĕ.

Федоров йулташ сăмахĕ

Йулташсем! Пайан пирĕн тĕлĕнмеле историлĕ кун. Пайан епĕр ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăçсен Советне депутата суйлама Шупашкар йал суйлав округĕнчен кандидат тăрататпăр.

Правалă епĕр. Хамăр кандидат тăратса, уншăн хамăр сасăлатпăр. Ку правана Сталинла Конституци пачĕ. Сталинла Конституци çине хамăр тунă çитĕнÿсене çырса хунă. Çитĕнÿсем пирĕн пысăк. Акă хамăр колхоза илес. Пурте пуйан пурăнма тытăнчĕç. Кил-çурт лайăх, вылъăх-чĕрлĕх çителĕклĕ. Ăшă тумтир тăхăнатпăр. Тутлă апат çийетпĕр. Ачапăча шкулта вĕренет.

Çакăн пек чухне ĕнтĕ ĕлĕкхи ылханлă пурнăç çине тарăхас килет. Пăх-ха, 12 çулта сторăжа кĕтĕм. Уйăхне 3 тенкĕ тÿлесе тăчĕç. Висĕ тенкĕ! Калама темĕнле те, пурăнасси тата хĕнтерехчĕ. Кирпĕч заводĕнче те ĕçлерĕм. 7 уйăх ĕçлесе 25 тенкĕ илтĕм. Апат-çимĕç: тăвар, шыв, çĕрулми пулчĕ. Тăран ĕнтĕ çавăнпа. Килĕ-çурчĕ ишĕлсе ларатчĕ.

Халĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕншĕн рай уçăлчĕ. Ĕлĕк çын вилсен райа кайать, тетчĕç пире. Кунта ĕнтĕ—Совет çĕршывĕнче вăл рай. Ăна Сталин çĕнтерсе туса пачĕ.

Епĕ парти интересĕшĕн, телейлĕ çĕршывшăн ĕçлекене ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăçсен Советне депутата суйлама Шупашкар йал суйлав округĕнчен ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ çумĕнчи Парти Контролъ Комиççин Чăваш республикĕнчи уполномоченнăйне Сахйанова Марийа Михайловнăна кандидата тăратма сĕнетĕп. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

„Осоавиахим" колхоз колхозникĕсен пухувĕнче йышăннă резолъуци

Пухура 61 çын пулнă

Епĕр, Шупашкар районĕнчи „Осоавиахим" колхозри колхозниксем, Аслă Совета суйласси çинчен сÿтсе-йавнă хыççăн, ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăçсен Советне депутата суйлама Шупашкар йал суйлав округĕнчен ПСК(б)Парти Тĕпкомĕ çумĕнчи Парти Контролъ Комиççин Чăваш республикĕнчи уполномоченнăйне Сахйанова Марийа Михайловнăна кандидата тăрататпăр.

Епĕр Сахйанова йулташран Шупашкар йал суйлав округĕ тăрăх Националънăçсен Советне депутата суйлама баллотировкăна тăма килĕшме ыйтатпăр.

Шупашкар йал суйлав округне кĕрекен колхозсенчи колхозниксене епĕр тăратнă Сахйанова йулташ кандидатуришĕн тăма ыйтатпăр.

Совет Сойузĕ тăрăх

* Казахстан столицинче—Алма-Атара иккĕмĕш пйатилеткă зайомĕн тăваттăмĕш тиражĕ пулса иртвĕ.

* Челъабинск облаçĕнчи Йеткулъск районĕнчи „Рассвет" ертелри колхозниксем пĕр ĕçкунĕ çине вăтăр килограм тыра илеççĕ. Ку ертелĕн конъухĕ Божĕнин хăй арăмĕпе 1 422 пăт тыра тата 4 пин те 500 тенкĕ укçан ĕçлесе илнĕ.

* „Ленфилъм" студийĕ „Волочаевские дни" кинофилъм кăларать. Картинăра Инçет Хевелтухăç ĕççыннисем Йапони интервенчĕсемпе тата шургвардейцăсемпе 1918—1922 çулсенче паттăр çапăçни çинчен каласа панă. Филъм режиççорĕсем—орденоносец Василйевсем. (ТАСС).

ШУПАШКАР

Шупашкарти типографипе тир-сăран заводĕнчи рабочисемпе служăшчисем тата пичет работникĕсем

Алексей Иванович Стецкийе

Националънăçсен Советне депутата суйлама кандидата палăртрĕç

Типографи корпусĕсем тăрăх шăнкрав сасси йанăраса кайрĕ: вăл кăнтăрла иртни 4 сехет çитнине, кăнтăрлахи смена ĕç пĕтернине пĕлтерет. Наборщиксем, печатниксем, переплъотчиксем, журналиссем клуба кĕрсе вырнаçаççĕ. Пайан чаплă кун: Чăвашполиграфтрестăн Шупашкарти типографинче тата республикăри хаçат редакцийĕсенче ĕçлекенсен пĕрлехи пухувĕ Шупашкар хула суйлав округĕнчен Националънăçсен Советне депутата суйлама кандидат тăратать.

Акă трибунă çине Семен Федорович Ведин тухать. Вăл печатникре 33 çул хушши, Шупашкарти типографинче 1921 çултанпа ĕçлет. Халъ—пичетлекен цех началъникĕн помошникĕ.

— Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пĕтĕм халăхпа ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлатпăр. Пирĕн хамăрăн чи аслă оргăна рабочи класшăн, хресченсемшĕн тата мĕн пур ĕççыннисемшĕн чунпа-вартан тăрăшакан çынсене суйлас пулать. Епĕ Националънăçсен Советне депутата суйлама Алексей Иванович Стецкий йулташ кандидатурине сĕнетĕп. Стецкий йулташ пирĕн парти Тĕп Комитечĕн партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕн пуçлăхĕ. Сталин йулташăн соратникĕ. Вăл партире тăракансене те, партире тăманнисене Маркс—Енгелъс—Ленин—Сталин вĕрентÿвĕсене вĕренме пулăшать.

Ведин йулташ сĕнĕвне пуху тăвăллăн алă çупса йышăнать.

Унта Чăвашполиграфтрест секретарĕ комсомолкă Йуричева йулташ, „Красная Чувашия" хаçат редакторĕ—Смирнов йулташ, парторг Круглов йулташ, учетчик-комсомолец Анисимов йулташ тухса калаççĕ. Вĕсем пурте Алексей Иванович Стецкий йулташ кандидатурине хапăллаççĕ.

П. И. Круглов йулташ сăмахĕ

Набор цехĕн инструкторĕ, парторг.

— Ылханлă патша саманинчи асаплă пурнăçа епĕ лайăх астăватăп. Ăçтан астăвас мар-ха: унчухнехи йăвăр пурнăç манăн чĕрене касса кĕнĕ. Пуçламĕш шкулта 4 çул вĕреннĕ хыççăн, малалла вĕренме кайаймарăм. 12 çулхи ача типографине кайса кĕтĕм. Хуçасен типографинче талăкра 14—16 сехет ĕçлеттĕмĕр. Крассин лампипе подвалта ĕçлеме тивеччĕ. Ĕçукçи çапах та выçса вилесрен тăранкаласа пурăнма çеç çиткелеччĕ.

Пирĕн аттен 6 ача пулнă. Пĕри те вĕренеймен.

Халĕ мĕнле пурăнатпăр-ха? Епĕ типографире 46 çул ĕçлетĕп. Совет влаçĕ пулсан тин телейлĕ пурнăç тупрăм. Халĕ пирĕн типографи те ĕлĕкхи мар: çута, аслă, сывлăш нумай, наборлас ĕçе те механизацилене.

Манăн 4 ача: аслă хĕр инженер, тепри — лъотчицă, ывăлăм—техник-строителĕ, тăваттăмĕш те вĕренет.

Çавăн пек телейлĕ пурнăça пире, йулташсем, Ленин—Сталин партийĕ, пирĕн йуратнă çулпуç Сталин йулташ пачĕ. (Алă çупаççĕ). Националънăçсен Советне халăхшăн тăрăшакансене, коммунисăм ĕçĕшĕн пĕтĕм вăй-халне паракансене, халăх тăшманĕсене хирĕç пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешекенсене суйлас пулать.

Кунта Националънăçсен Советне депутата суйлама Алексей Иванович Стецкий йулташ кандидатне сĕнчĕç. Епĕ Стецкий йулташ кандидатурине пĕтĕм чĕререн хапăллатăп. Алексей Иванович пирĕншĕн, типографинче тата редакцисенче ĕçлекенсемшĕн, уйрăмах çывăх. Стецкий йулташ Шупашкарта Пичет çурчĕ туса лартма пулăшрĕ. Вăл ПСК(б)П Тĕпкомĕнче партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕн пуçлăхĕнче ĕçлесе, Сталин йулташăн çывăх помошникĕ пулса тăрать. (Алă çупаççĕ). Стецки йулташ çĕнĕ Конституци çырса хатĕрленĕ çĕрте Сталин йулташа нумай пулăшнă. Вăл тăрăшнипе мĕлйун-мĕлйун ĕççыннисем марксисăм-ленинисăмпа хĕçпăшалланаççĕ. Стецкий йулташ халăх тăшманĕсене хирĕç пĕр хĕрхенÿсĕр кĕрешсе пырать.

Епĕ партин шанчăклă ывăлне—Алексей Иванович Стецкий йулташа Шупашкар хула суйлав округĕнчен Националънăçсен Советне депутата суйлама кандидата тăратнине хапăл тума чĕнетĕп. (Алă çупаççĕ).

Шупашкарти типографире ĕçлекенсемпе пичет работникĕсен пĕрлехи пухувĕ йышăннă резолъуцирен

1. Шупашкар суйлав округĕ тăрăх Националънăçсен Советне депутата суйлама ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕн пуçлăхне, Сталин йулташăн çывăх помошникне, партин тĕп çулйĕрĕшĕн хытă кĕрешекен, халăх тăшманĕсене хирĕç ним хĕрхенмесĕр кĕрешекен, мĕн пур ĕççыннисене Маркс—Енгелъс—Ленин—Сталин вĕрентÿвĕсене вĕренме пулăшакан çирĕп болъшевика—Алексей Иванович Стецкий йулташа кандидата тăратас.

2. Пĕрлехи пуху А. И. Стецкий йулташран Шупашкар суйлав округĕ тăрăх ССР Сойуз Аслă Совечĕн Националънăçсен Советне депутата суйланма баллотировкăна тăмашкăн килĕшме ыйтать.

Шупашкарти тир-сăран заводĕнче

Октябĕрĕн 28-мĕшĕнче Шупашкарти тир-сăран тăвакан заводри рабочисем, служăшчисем, инженерла-техникла работниксем 144 çын пухува пухăннă. Пайан Шупашкар суйлав округĕнчен ССР Сойузĕн Националънăçсен Советне депутата суйлама кандидат тăратмала.

Трибунă çине чи малтан Пастрйаков рабочи тухса тăрать.

— Халъхи телейлĕ те савăнăçлă пурнăçшăн рабочисемпе хресченсем сахал мар кĕрешнĕ. Кĕрешÿ ахалъ пĕтмерĕ. Халĕ епĕр пĕр çĕршывра социалисăм турăмăр. Кун çинчен Сталинла Конституцинче те çырнă. Ку ĕçре пире, рабочисене, Ленинпа Сталин йертсе пынă. Пайан пирĕн Шупашкарти суйлав округĕнчен ССР Сойузĕн Националънăçсен Советне депутата суйлама кандидат тăратмала. Ку кун пирĕншĕн савăнăçлă кун пулса тăрать. Пирĕн аслă совета рабочи класшăн тăрăшса ĕçлекен çынсене суйламала. Епĕ хам йенчен, Сталинăн соратникне, ССР Сойузĕн Националънăçсен Советне депутата суйлама Парти Тĕпкомĕн Партилĕ пропагандипе агитаци пайĕн пуçлăхне Алексей Иванович Стецкий йулташа кандидата тăратма сĕнетĕп.

— Ĕлĕкхи вăхăтра тĕттĕмре пурăннă трахомлă чăваш халăхĕ 20 çул хушшинче тĕлĕнмеле пысăк çитĕнÿсем турĕ. Мĕншĕн пирĕн савăнас мар, мĕншĕн пирĕн стахановла ĕçлес мар. Ку çитĕнÿсене аслă çулпуç Сталин йулташ йертсе пынипе тунă епĕр. Епĕ Стецкий йулташа ССР Сойузĕн Националънăçсен Советне депутата суйлама кандидата тăратнипе килĕшетĕп, уншăн сасăлатăп,—тет Кузьмин стахановец.

— Коммунисла партипе рабочи клас ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçленине Стецкий йулташ ĕçре кăтартнă, тет Шаронов йулташ.

Пухури рабочисенчен нумайĕшĕ хăйсене сăмах пама ыйтса алăсене çĕклеççĕ. Кузьмин хыççăн Бызов, Гулъайев тата ыттисем те тухса каларĕç. Вĕсем пурте Стецкий йулташа Шупашкарти суйлав округĕнчен ССР Сойузĕн Националънăçсен Советне депутата суйлама кандидата тăратма сĕнеççĕ.

Пуху пĕр сасăпах çакăн пек резолъуци йышăнчĕ:

Шупашкарти суйлав округĕнчен ССР Сойузĕн Националънăçсен Советне депутата суйлама болъшевикла партин, пирĕн çĕршывăн шанчăклă ывăлне, пĕтĕм халăхсен аслă çулпуçĕн Сталин йулташăн соратникне Алексей Иванович Стецкий йулташа кандидата палăртас.

Стецкий йулташран ССР Сойузĕн Националънăçсен Советне депутата суйлама Шупашкар суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшнине пĕлтерме ыйтас.

Сывă пултăр Ленинпа Сталинăн аслă партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн тăван тата Аслă Сталин!

Октябĕрĕн 22 мĕшĕнче Молотов суйлав округĕнче (Мускав) суйлав умĕнхи канашлу пулса иртнĕ. ÿКĔРЧĔК ÇИНЧЕ: Канашлу президиумĕ.

Лоскутов фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото)

Хĕрарăмсем пример кăтартаççĕ

Пелаги Короҫова пайан та ĕçе ытти кунхи пекех пычĕ. Ĕç пуçланасси тата 15 минут. Хĕрлĕ кĕтессе кĕрсе çĕнĕ хаçатсем вуларĕ, кăтарту хăми çинче çырнă тĕслĕхсене пăхса тухрĕ. Малтанах вăл хăйпе ăмăртса ĕçлекен Лисановăн ĕнерхи ĕçĕн итогĕсене асăрхарĕ. Çук, ĕнер те Лисанова плана ун чухлĕ тултарайман иккен. Çавăнпа та паянхи кун та Короҫова Лисановăран лайăхрах ĕçлеме хавхаланчĕ.

Ĕç пуçланчĕ. Короҫова ĕçлекен лентăлă шлифоваҫнай станок патне *материалсем пырса купаланчĕç.* Пĕр вагонеткă сĕтел çинĕ йакатса пĕтернĕ хыççăн, ун патне пукан урисем, ларчăкĕсем тата *йешчĕк хатĕрĕсем пырса тийерĕç.* Ĕççем ăнсах пыраççĕ. Короҫова алли станокпа тавлашса ĕçлет, пĕр оборота та ахаҫ йамасть вăл. Пĕр детаҫе станока кĕртсе йавă хушăра, тепĕр алли материал хатĕрлет. Хăшпĕр кун ун алли витĕр 2000—3000 штук тĕрлĕрен детаҫсем çаврăнса тухаççĕ.

Октăберĕн 26-мĕшĕнче Короҫовă 7 сехет хушшийех ĕçлеймерĕ, материалсем çитмерĕç. Анчах çапах та нормăна 240 процент тултарчĕ. Унăн чи палла рекорчĕ октăберĕн 7-мĕшĕнче пулнăччĕ. Сменăри нормăна 274 проц. тултарса, шлифоваҫнай станок çинче ĕçлекенсенчен чи мала тухрĕ. Ку вăл шăпах Лисанова йулташпа ăмăрту договорĕ çырнă хыççăн пулнă. Лисановă халĕ те ăна çитеймест. Сентябĕр уйăх планне вăл 160 проц. тултарнă пулсан, Короҫова 200 проц. тултарнă.

— Чаплă Октăбĕр уйавчен епĕ тата та тепĕр çитĕнÿ тăвасшăн кĕрешетĕп. Материалсем парсан 300 процент тултаратăпах,—терĕ Короҫова.

Кун пек производствăра ĕçлекен *хĕрарăмсем Çĕмĕрлери* С. П. Петров йачĕпе тăракан комбинатра сахал мар. Торцовка станокĕсемпе ĕçлекенсем Беловăпа Левицкайа *стахановкăсем кулленхи нормăна* 200—250 проц. тултарса ĕçлеççĕ. Полировшчицăсем — Артемйевăпа Семеновă октăберĕн 26-мĕшĕнче сăрлас (йакатас) ĕçре 5 операципе ĕçлесе сменăри нормăсене иккĕшĕ те 365 проц. тултарса, вихçан туман çĕнĕ çĕнтерÿ турĕç.

Октăбĕр революцийĕ пулнăранпа 20 çул тултарнă уйава комбинатра ĕçлекен хĕрарăмсем ĕçре çитĕнÿ тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Социалисăмла ăмăрту сарăлсах пырать.

Ҳ. Л.

„Триер“ колхоз йалхуçалăх выставкине хатĕрленет

Шăмăршă районĕнче пурĕ 30 колхоз. 30 колхозран 5 колхоз 1938 çулта Пĕтĕм Сойузри Йалхуçалăх Выставкинче пулма зайавлени панă. Выставкăра пулма пултаракан колхозсем ку районра татах тă пур.

Выҫăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç йенĕпе ике колхоз выставкăра пулма йышăннă: пĕри — „Триер“ колхоз, тепĕри — „Пламя труда“ колхоз.

„Триер“ колхозра нумайранпа ĕнтĕ орденоносĕц Капчиков йулташ председатĕл пулса ĕçлет. Кунта сурăх ферми пур. Фермă ĕçĕсем çакăн пек:

Фермăра пурĕ 397 сурăх. Вăл шутран 45 пуç черкас ăратран тата 7 цигай-меринос ăратран. Сурăхсемсĕр пуçне тата 144 пуç путексем. Çулталăкра вăтам шутпа кашни сурăхран 3,5-шер килограм çăм касса илнĕ, кашни 100 пуç сурăхран 155 путек илнĕ. Выставкăна Капчиков йулташ цигай-меринос ăратри сурăхсене — „Белянка“, „Кама“ тата „Илина“ сурăхсене тăратма шутлать. Вăл сурăхсем çакăн пек: „Белянка“ 1932 çулта çуралнăскер, иртнĕ çулта унăн йăвăрăшĕ 70 килограм пулнă, 6 килограм çăм панă. Кăçал вăл 75 килограм тайать, пĕр хут кассах 4,5 килограм çăм тухнă, иккĕмĕш хут каснă чухне те çавăн чухлĕ тухмала. „Кама“ 1933 çулта çуралнăскер. Иртнĕ çулта вăл 64 килограм тайнă, 3,4 килограм çăм панă. Кăçал 67 килограм тайать, пĕр хут кассах 3,6 килограм çăм тухнă. „Илина“ та çав çулхийех. Иртнĕ çулта 49,9 килограм тайнă, 4,0 килограм çăм панă. Кăçал 63 килограм тайать, пĕре кассах 4,1 килограм çăм тухнă.

Пĕтĕмĕшпе илсен „Триер“ колхозăн сурăх ферми выставкăра пулмали условисемпе килĕшет. Колхозра сурăх ĕрчетмели 1936 çулхи тата 1937 çулхи государствă планне пĕтĕмпех тултарнă.

„Пламя труда“ колхозра 1935 çултан пуçласа чуптару пункти пуçлăхĕ пулса Йефимов Александр ĕçлет. Вăл пĕр уйăхлăх курсра вĕренсе тухнă хыççăн йалан тă рăшса ĕçлесе пырса колхозра лаша ĕрчетмели государствă планне тултарса пыма нумай пулăшнă. 1935 çулта план тăрăх пурĕ 24 кĕсре чуптарса хăвармала пулнă. Çавсене пурне те чуптарса 1936 çулта 20 тыха илнĕ. Унсăр пуçне тата йединоличниксенне 12 кĕсре чуптармала пулнă. Вăл плана та Йефимов й. тултарса 11 тыха илнĕ. 1936 çулта 30 кĕсре чуптармала пулнă. 30 чуптарнă, 28 тыха илнĕ.

Выҫăх-чĕрлĕх ĕрчетмели государствă планне колхоз çултан çула ытлашшипех тултарса пынă.

Районра уй-хир ĕçĕ йенĕпе те лайăх ĕçлекен колхозсем пур. Анчах та районри руководителсемпе йалхуçалăх, специалисĕсем Пĕтĕм Сойузри Йалхуçалăх Выставкине хатĕрленес тĕлĕшпе колхозсене çителĕклĕ пулăшса пымаççĕ, выставкă çинчен кирлĕ пек ăнлантарса пани те пулман.

Н. Колесников.

Хут пĕлменлĕх пĕтет

Канашри вагонсем йусакан заводра ССР Сойузĕн Аслă Советне суйланă тĕле хут пĕлменлĕх пĕтсе пырать. Октăберĕн 1-мĕш тĕлне хут пĕлменнисене 98 çын, хутла сахал пĕлекенсене 128 çын вĕрентсе кăларнă. Халĕ тата 20 çын вĕренеççĕ.

Ив. Малов.

Кĕрхи çĕртмене сухаласа пĕтермеле

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешесси вăл—çитес çул суртри акмали вырăнсене вăхăтра сухаласа хăварнинчен нумай килнине пурте пĕлеççĕ. Иртерех, тарăнрах сухаласан кĕрхи çĕртмен пахалăхĕ ытларах пулни те пуриншĕн те паллă. Кăçал вăйлă тырпул туса илнĕ тĕслĕхсем кĕрхи çĕртме мĕн тери пысăк вырăнта тăнине пит лайăх кăтартса параççĕ. Хаҫ ĕнтĕ пур колхозсенче пекех авăн çапса, пахча çимĕçсене пухса пĕтернĕ. Лаша вăйĕ те пушанна темеле. Анчах хăшпĕр колхозсенче çав-çавах трактăрсем çине шанса ку тарапа çитсе те кĕрхи çĕртмене сухалама тытăнман.

Шемшерти „Заря“ тата „Çурлапа Мăлатук“ колхозсенче (Шупашкар р-нĕ) кĕрхи çĕртмене хаҫ те сухаламан. „Заря“ колхозĕ уйа тухса плугсене вырнаçтарса пĕр-икĕ çаврăнсанах суха тăвассине пăрахса кĕчĕ. „Тракторсем пайан-ыран килмеле, сухаласа парĕç-ха“ тенипе пуçланă ĕçе пăрахрĕ,—тесе пĕлтерет йалкор В. Захаров.

Орбаш йалĕнчи „Хаотар“ колхозра та çĕртмене вăхăтра сухаласишĕн васкаман. Ку тарана çитсе те пĕр гектар та сухаламан. Ĕçе йĕркелеме пĕлменнипе „ĕç вăйĕ çитмест“ тесе лараççĕ.

Çав вăхăтрах чылай колхозсенче трактăрсем килсе сухаласа парассине кĕтмесĕр лашасемпех усă курса вăхăтра; пысăк пахалăхпа сухаласа хăварчĕç. Елĕк районĕнчи Йуçкасси йалсоветне кĕрекен „Комбайн“, „Социалисăм“, „Броневик“ колхозсенче кĕрхи çĕртме туса хăварассишĕн хытă ĕçлерĕç. Кĕрхи çĕртме тăвас плана пурнăçласа пычĕç. Кĕрхи çĕртме сухалас ĕçпе малта пыракан Кувакинă районĕ çĕртме тăвас плана 106,7 проц. тултарнă.

Кĕрхи çĕртмене сухаласа хăварма пирĕн пур условисем те пур. „Тракторсем килмерĕç, ĕç вăйĕ çук“ тесе ларни вăл сăлтав мар.

Кăçалхи çул вăйлă тырпул туса илнĕ тĕслĕхсене çирĕплетсе, килес çул тата ытларах илессишĕн вăйа хурса ĕçлемеле.

К. П.

Государствă умĕнчи обйазательствăсене 100 процентчĕпех тултарнă

Хĕрлĕ Чутай районĕн Селугин йалĕнчи „Хĕрлĕ Октăбĕр“ колхоз государствăна тĕрлĕрен тырпулă, техникăлă культурăсене, çĕрулмине пĕтĕмĕшпех парса татрĕ. Колхозри таварлă фермă аш-какай, çу парас плана тултарчĕ. Выҫăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана лашасем йенчен те фермăра та 100 процентчĕпех пурнăçланă. Выҫăхсене хĕл вăхăтĕнче усрама йăшă витесем хатĕрлесе çитернĕ. Пăрусене ваҫҫи уйрăм çĕнĕ, çутă, йăшă вите туса лартнă. Килес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешнĕ май кĕрхи çĕртме тарăнăн сухаласа хăварчĕç. Колхозниксем „ССР Сойузĕн Оборонине тĕреклетмели зайом“ укçине чылайĕшĕ тÿлесе татнă. Йалхуçалăх налогне те тÿленĕ. Колхозра кăçал молотилкă, вейалкă туйаннă. Чукунçул тăвас ĕçре плана ытлашшипех тултарнă.

Ф. Добров.

Мускав ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленет.

Мускав совечĕн хулари çĕрсен пайĕн геодези конторинче Мускаври суйлав округĕсен карттисене тăвас ĕçе пĕтернĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: (сулахайран сылтăмала) техник-картограф Д. П. Шчербинский, инженер картограф К. П. Красилников тата техник картограф хатĕр карттăсене пăхса тухаççĕ.

Д. Шоломовичпа Д. Каспинăн фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Кружоксене комсомолецсем йертсе пыраççĕ

ÇĔМĔРЛЕ (хамăр корр). Механизацилĕ вăрман пунктĕнчи килхуçи арăмĕсен хушшинче Сталинла Конституципе „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенине“ вĕрентес ĕçе комсомолецсем пуçарса пыраççĕ. Вĕсем килхуçи арăмĕсем хушшинче уйрăм калаçусем, пухусем туса иртерне. Конституципе суйлав саккунне вĕренме кружоксем организациленĕ.

Вăрман пунктĕнчи комсомол комитечĕ ку тĕлĕшпе пултарулă ĕçлекен комсомолецсенчен агитатăрсем уйăрчĕ. Уйăрнă комсомолецсем хастаррăн ĕçе тытăнчĕç. Вĕсем *халиччен агитатăрсем пулман пулсан та,* нихăш йенчен те лайăх ĕçлекен агитатăрсенчен йулмаççĕ. Пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Акă И. С Перов йулташ Мыслецри вăрман цехĕнче ĕçлекенсемпе килхуçи арăмĕсем хушшинче суйлав саккунне вĕрентес тĕлĕшпе ĕçлет. Ку таранччен вăл 7 заҫати туса иртернĕ. Вăл икĕ кружока йертсе пырать. Унăн кружокĕсенче пĕтĕмпе 35 çын вĕренет. Нумайах пулмасть, пĕр кружокĕнчен 12 çын вĕренсе тухрĕç.

Мыслецра йалан вăрманта ĕçлекенсен хушшинче суйлав саккунне вĕрентес тĕлĕшпе Вдовенков комсомолец ĕçлет. Вăл 3 заҫати туса иртернĕ. Çавăн пекех Алҫакин йулташ та килхуçи арăмĕсем хушшинче 3 заҫати туса иртернĕ. Унăн кружокне 19 çын вĕренме çÿрет. Вĕренекенсем пысăк тимлĕхпе итлеççĕ.

Комсомол комитет секретарĕ Ваҫцевич йулташ икĕ кружока йертсе пырать. Пĕр кружокĕнче Сарăри трактор çулĕ çинче ĕçлекенсем (пĕтĕмпе 26 çын) вĕренеççĕ. Вăл икĕ заҫати туса иртернĕ. Заҫатисене пĕр сиктермесĕр çÿреме тăрăшаççĕ. Тепĕр кружокĕнче вăрман пункт кантурĕнче ĕçлекен служащисемпе инженерла техникла работниксен арăмĕсем—пĕтĕмпе 35 çын вĕренеççĕ. Хĕрарăмсем хамăраннипе йутçĕршыври суйлав системисем çинчен, граждăнсен прависемпе обйазăннăçĕсем çинчен уйрăмăнах хытă интересленеççĕ. Заҫатисенче пурте хăйсен кăмăлĕсемпе шухăшĕсене каласа параççĕ. Ăнланмасăр йулнă вырăнсене хыттăнах тишкерсе тухаççĕ. Çавăнпа та пĕлмесĕр йулнă ыйтусем пулмаççĕ.

— Епĕ рабочисем хушшинче те суйлав саккунне вĕрентетĕп. Унта та рабочисем пысăк хастарлăхпа вĕренме çÿреççĕ,—тет Ваҫцевич йулташ. Хĕрарăмсем нихăш йенчен те арçынсенчен йулмаççĕ. Вĕсем суйлав ыйтăвĕсене пур йенчен те тĕплĕн пĕлме тăрăшаççĕ. Вĕсем суйлав Положенипе çеç мар, тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсемпе те интересленеççĕ. Уйрăмăнах вĕсем Испанипе Китайри вăрçăсем çинчен ыйтса пĕлеççĕ.

Комсомол комитечĕ рабочисем хушшинче Конституципе суйлав саккунне вĕрентес ĕçе организацилес тĕлĕшпе чылай тăрăшрĕ. Кружоксене йертсе пырас тĕлĕшпе пĕтĕмпе 8 комсомолец ĕçлет. Вĕсем кружоксенче вĕрентнисĕр пуçне тата уйрăм килсене кĕрсе ăнлантарса çÿреççĕ. Анчах кунпах лăпланса ларма кирлĕ мар-ха. Вăрман пунктĕнче ĕçлекенсем хушшинче вĕренĕве йавăçтарман çынсем сахал мар. Трактористсемпе вăрманта ĕçлекенсем хушшинче вĕренме пурте çÿремеççĕ.

Агитатăрсем йалсене саланчĕç

КӲКЕÇ. „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалли Положенине“ йалсенчи кружоксенче ăнлантарса пама агитатăрсем хатĕрлес тĕлĕшпе 10 кунлăх курс организацилерĕç.

Курсран 40 çын вĕренсе тухса йалсене саланчĕç. В. Захаров.

* * *

ЕЛĔК. Йехремкасси йалсоветĕнче ĕçлекенсемпе йалсоветри учителсен семинарĕ пулса иртрĕ. Семинарта суйлав Положенийĕ çинчен мĕнле майпа лайăхрах вĕрентесси çинчен каласрĕç. Ку семинарта пулнисем суйлав саккунĕ çинчен тĕплĕнтерех вĕрентме тытăнчĕç.

А. Степанов.

Истори учебникне нумай ыйтаççĕ

Çак кунсенче педагогикă институчĕн кенеке сутти киоскĕ А. Шестаков профессăрăн „ССР Сойуз историйĕн кĕске курсĕ“ учебнике 100 екземпҫар илсе пычĕ. Студентсем çав учебнике вунă минут хушшинче илсе пĕтерчĕç. Истори учебникне пигĕ нумай ыйтаççĕ. Вăл учебнике çитес кунсенче тата нумайраххăн *илсе килессе кĕтеççĕ.*

А. Сорокин.

Мĕн пачĕç колхозсем хресченсене

I.

Çирĕм çул кайарах—аслă штурмă туса пролетари диктатури туса хунă хыççăн тепĕр куннех, совет правителстви çĕр çинчен декрет кăларчĕ. Çак декрет тăрăх, çĕр уйрăм харпăрлăхра тăрассине йаланлăхах пăрахăçа кăларнă, улпут çĕрĕсене конфискаци тунă.

Октăберти социалисăмла Аслă революци анчах хресченсен ĕмĕрхи ĕмĕтне çитерме пултарчĕ. Хресченсем 150 мĕлйун гектар ытла ĕлĕк улпут, хысна, мăнастир çĕрĕ пулнă çĕрсене илчĕç. Революцичченхи Российăра 30 пине йахăн пуйан çĕрулпучĕсен аллинче — 10 мĕлйуна йахăн чухăн хресчен хуçалăхĕсем тытнă чухлĕ çĕр пулнă. Хăшпĕр улпутсен имонийĕсем тăстан сарăлса выртнă. Рукавишников улпут 800 пин десетин ытла çĕр тытнă; Голицын—мĕлйун десетин ытла. Вырăссен йулашки патши Николай II тата унăн тăванĕсем пĕр Йевропăри Российă пайĕнче кăна 8 мĕлйун гектар çĕр тытнă.

Улпут, хысна, мăнастыр çĕрĕсемсĕр пуçне тата колхозсене ĕлĕк кулаксен аллинче тăнă çĕрсен 80 мĕлйун гектар куçнă.

Çĕр уйрăм харпăрлăхра тăрассине пĕтерни, çĕре национализацилени — вакă хресченсенĕ хăйсен саплăк çĕрĕ сумне чура пек сыхăнса тăрассинчен хăтарчĕ, çапла вара вакă хресченсене колхоза куçма çăмăллатрĕ.

Пирĕн çĕршывра халĕ государствă актисем парса колхозсене тÿлевсĕр тата срукçăр усă курма, урăхла каласан—ĕмĕрлĕхе 400 мĕлйун гектар ытла çирĕплетсе панă. Йулашки çулталăк хушшинче тата совхозсенчен 22,4 мĕлйун гектар çĕр касса панă.

Çав вăхăтрах капиталисăмла çĕршывсенче хресченсем улпутсен пусмăрĕнчен терт кураççĕ, çĕр çитмен пирки асапланаççĕ. Йапони императăрĕ хăйĕн çемйипе 1 мĕлйун та 500 пин гектар ытла çĕр тытать. Çав вăхăтрах 2 мĕлйун та 500 пин хресчен хуçалăхĕсем тытакан çĕр хисепĕ император тытакан çĕр хисепĕнчен те сахалтарах. Германире 412 çĕрулпучĕ 2,5 мĕлйун хресчен хуçалăхĕ чухлĕ çĕр тытать. Италире шултăра çĕр хуçисем аллинче пĕтĕм çĕр хисепĕнчен çурри тăрать.

Капиталисăмла çĕршывсенче хресченсем йухăнчăка туса пыраççĕ, çĕрсĕр тăрса йулаççĕ. 1933—1935 çулсенче Америкăра 800 пин фермер çĕрне торги туса сутса йанă.

Пирĕн патăрта ун пек мар. Пирĕн совет хресченĕ малашлăх çине шанчăклăн пăхать—унăн ытлăн-ситлĕн çĕр пур; колхозниксен массин пурнăçĕ питĕ хăвăрттăн пуйанланса пырать.

II

Çĕре национализацилесе валеçнĕ хыççăн, ĕлĕк пуçĕпех çĕр тытман хресченсем те хăйсем хуçалăх тытма пуçларĕç. Акă мĕншĕн ĕнтĕ революцичченхи вăхăтра Российăра вак хресчен хуçалăхĕсем 15—16 мĕлйун пулнă, 1928 çулта çак хуçалăхсен хисепĕ 24—25 мĕлйуна çитрĕ.

Ленин—Сталин партийĕ нихăçан та вак хресчен производствине çаплипех хăварас тесе шухăшламан. Парти хăйумне йалхуçалăхне социалисăмла çĕнетес задачă лартнă. Çакна тума йалта питĕ пысăк ĕçсем туса иртермеле пулнă —вак çĕр хуçин психологине улăштармала пулнă, çак ĕçе тума—шултра машиналă техникă кирлĕ пулнă.

„Вак çĕрĕççыннисене çĕнетес ĕç,—тенĕ Ленин партин X-мĕш Сйесĕнче,—унăн пĕтĕм психологине, хăнăхăвĕсене çĕнетес ĕç—ăрусене пыракан ĕç. Вак çĕрĕççынни тĕлĕшĕнчен çак ыйтăва татса пама, унăн пĕтĕм психологине сыватма тейĕпĕр, материаллă никĕс, техникă, çĕрĕçĕнче тракторсемпе, машинсемпе массăлă масштабпа усă курни, массăлă масштабпа електрификаци туни кăна пултарать. Акă мĕн тымартанпах тата пысăк хăвăртлăхпа вак çĕрĕççыннисене çĕнетнĕ пулĕччĕ“.

Çĕрулпучĕсемпе капиталиссене хăваласа йанă, анчах çынна çын експлоатацилессине пĕтĕмпех пĕтерсе çитереймен пулнă. Кулак йулнă. Ăна административлă майсемпех пĕтерме пулман, мĕншĕн тесен, вăл вак производствăран тухса пынă. Ленинпа Сталин пĕр хут çеç кăтартса паман: вак хресчен хуçалăхĕ вăл, унта хăтаракан сăлтавсене пула, йаланах капиталисăма çуратса пырать. Капиталисăма йалхуçалăхĕнче пĕтерес тесен, кулаксем клас пулса тăнине пĕтерес тесен; хресченсене кулак експлоатацинчен кăларас тесен—вак хресченлĕ производствăран коллективлă шултра производствăна куçмала пулнă.

III.

1929 çулта совет йалĕнчи чухăнсемпе вăтам хресчен масси хушшинче аслă улшăну пулчĕ. Вĕсем мухтава кăларнă „уйрăм харпăрлăх“ йалавне татăклăнах пăрахса, коллективисăм çулĕ çине, социалисăм çулĕ çине куçрĕç. Çапла, социалисăм çулĕ çине, мĕншĕн тесен колхозсем вĕсем социалисăмла йышши предприйатисем: вĕсенче производствă хатĕрĕсене пĕрлештернĕ, експлоатаци çук унта, хуçалăха коллективлă ĕç тытса пырать.

Çак аслă улшăнува большевиксен партийĕ организациленĕ. Парти майпенмайпенех хресченсене коллективизаци патне хатĕрлесе пынă. Вăл вĕсене хăйсен опычĕ тăрăх коллективлă производствă пĕчĕк производствăран усăлăрах пулнине кăтартма тăрăшнă.

Çак улшăнува, чăн малтан, хамăр çĕршыва индустриализацилени хатĕрленĕ. Çак майпа анчах йалхуçалăхне техникăпа хĕçпăшаллантарма тĕреклĕ никĕс туса пыма май пулнă.

Партин XIV-мĕш Сйесĕнче Сталин йулташ индустриализаци программи çинчен каласа пĕлтерчĕ. Ку программă икĕ пйатилеткă никĕсĕнче—кайа йулнă çĕршывра социалисăм тăвас ĕçсен пйатилеткисен никĕсĕнче пулнă.

„Задачă—çак çĕршыва вăтам ĕмĕрсен реҫси çинчен, тĕттĕмлĕх реҫси çинчен хаҫхи вăхăтри индустрипе машиналанă йалхуçалăх реҫси çине куçарасси пулнă. Задачă, хăвăрах куратăр, йывăр пулнă. Ыйту çапла тăнă: йе епĕр çак задачăна кĕске вăхăтрах татса хурса хамăр çĕршыва социалисăма тĕреклететпĕр, йе епĕр ăна татса параймастпăр, вара пирĕн техникă тĕлĕшĕнчен вăйсăр, культурă тĕлĕшĕнчен тĕттĕм çĕршыв пăхăнмаламарлăхне çухатать, империалисăмла державăсен аллинче вăйă обйекчĕ пулса тăрать“. (Сталин).

Сутăнчăксемпе шпионсен троцкисла-бухаринла банди пур майсемпе те çĕршыва индустриализацилессине хирĕç, йалхуçалăхне коллективизацилессине хирĕç кĕрешрĕç. Вĕсем пирĕн çĕршывра тепĕр хут капиталисăм йĕрки туса хума, Совет Сойузне империалисăмла государствăсене пăхăнса тăракан аграрлă çĕршыв туса хума тăрăшнă. Хамăр çĕршыва индустриализацилессипе йалхуçалăхне коллективизацилес ĕçре сталинла план çĕнтерсе илчĕ пулсан, кăна вара троцкисла-бухаринла мерзавцăсемпе аллăррăн кĕрешсе тунă.

Пĕр çĕршывра та социалисăм çĕнтерме пултарасси çинчен Ленин вĕрентнинĕ Сталин йулташ тăшмансенчен сыхласа хăварса, Ленин вĕрентĕвне тата та ытларах пуйанлатрĕ.

1929 çул тĕлне кулаксен класне пĕтерме кирлĕ материаллă тата политикăлă ĕçсене пурне те туса çитернĕ пулнă. 1929 çулăн вĕçĕнче Сталин йулташ аграрник-марксисен конференцийĕнчи историлĕ выступленийĕнче: талкăшпех коллективизаци тăвас никĕс çинче кулаксен класне пĕтерес лозунг çинчен каласа пĕлтерчĕ. Çак политикăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынă.

Колхозсем татăклăн, йаланлăхах çĕнтерчĕç.

Совет Сойузĕнчи хресченсен пурнăçĕ тĕпренех улшăнчĕ. Ĕлĕкхи тертлĕ пурнăç ĕмĕрлĕхех путрĕ. Революцичченхи вăхăтра хресчен килĕсем хушшинче: чухăнсем—65 проц., вăтамсем—20 проц., кулаксем—15 проц. пулнă. Пĕтĕм хресчен килĕсен хисепĕнчен: лашасăррисем—30 проц., инвентар тытманнисем — 34 проц., тыр акманниксем—15 процент пулнă. Акă вăл кивĕ йалăн хăратса тăракан çук та чухăн пурнăçĕ!

Октăберти социалисăмла Аслă революци хыççăн кулакăн тымарне каснă пулнă, чухăнсен йышĕ те чылайах чакрĕ, йал вăтамланса пычĕ. 1928—29 çулта: чухăнсем—35 проц., вăтамсем—60 процент, кулаксем 4—5 процент пулнă.

Колхоз стройĕ çĕнтернĕ хыççăн йал пурнăçĕ тĕпренех улшăнчĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн совет çĕршывĕнче текех кулаксем çук. Колхозсене пула йалта чухăнлăха пĕтернĕ, çуккисен, лашасăррисен, инвентар тытманнисен, çĕрсĕр хуçалăхсен категорине пĕтернĕ. Унсăрăн хулара та, йалта та безработицăна пĕтерме май пулман пулĕччĕ. Аса илер: коллективизаци пуçланаччен хулари безработнăйсен масси, чылай йенчен, йалти чухăнсем шучĕпе пулса пынă.

Йалта текех ĕнтĕ 20 — 30 мĕлйун чухăн хресченсем çук, мĕншĕн тесен вĕсем колхоза кĕнĕ, тулăхлă çынсем пулса тăчĕç, хăйсем пуйан пурнăçне ăнăçлăн тăваççĕ.

Халĕ, 1937 çулта, 243,7 пин колхозсенче 18,5 мĕлйун кил пĕрлешсе тăрать. Коллективизаци процентчĕ, акакан çĕр хисепĕнчен илсен, 99,1 процент. Йединоличниксем пурĕ те 1,4 мĕлйун кил кăна йулнă.

Халĕ пĕтĕм сутлăх тырă социалисăмла çĕрĕçĕ аллинче тăрать. 1935—36 çулта колхозсен сутлăх тырă 83,6 проц., совхозсен 12,7 проц. пулнă. Ĕлĕк вара, патша Российĕнче, сутлăх тырă вăтамсемпе чухăнсенчен пурĕ те 28,4 проц. кăна тухнă. Ун чухне сутлăх тырăран çурри кулаксен аллинче пулнă, çĕр улпучĕсен аллинче—21,6 процент.

Капиталисăм чухне хула йалти сĕткене ĕмсе илет, ăна експлоатацилет. Рабочи клас диктатури чухне хула йала телейлĕ пурнăç çулĕпе илсе пырать. Рабочи клас хресченсен çулпуçĕ, руководителĕ. Рабочи клас хресченсемпе сойуз тытса, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе, социалисăмăн пур тăшманĕсене те çĕмĕрсе тăкрĕ, хресченсене савăнăçлă, телейлĕ ĕçлев кÿчĕ.

IV.

Пирĕн çĕршыв тĕнчери чи малти вырăнта тăракан шултра çĕрĕçлĕ çĕршыв пулса тăчĕ. Совет Сойузĕнче совхов вăтамран 2703 гектар çĕр тытса тăрать, колхоз—473 гектар. Америкăра вăтамран пĕр хуçалăх пуçне 20 — 21 гектар çĕр, Германире унтан та кайарах, пурĕ те 6,5 гектар тивет.

Совет влаçĕ колхозсене шултра машиналă техникăпа хĕçпăшаллантарчĕ. Хресченсене авалхи чуралла, катăргăла ĕçрен хăтарчĕ. Йалхуçалăх ĕçĕ индустрилĕ ĕçĕн пĕр пайĕ пулса тăрать. Халĕ пирĕн колхоз уй-хирĕсенче вĕçĕмсĕр трактăр, комбайн, автомобил колоннисем çÿреççĕ. Машинăпа трактор станцисен хисепĕ 1937 çулти иÿнĕн 1-мĕшне 5.617 çитрĕ. Пирĕн машинăпа трактор станцисенчи тракторсем 1933 çулта (иÿнĕн 1-мĕшĕ тĕлне), суха ĕçĕпе шутласан, 39,8 мĕлйун гектар ĕçленĕ пулсан, 1936 çулта вара 169,9 мĕлйун гектар ĕçленĕ. 1937 çулхи план тăрăх пирĕн МТС-сем 227,3 мĕлйун гектар ĕçлемеле.

Колхозсем йышăнса тăракан пĕтĕм акмали çĕр хисепĕнчен 91,5 процентне машинăпа трактор станцисем ĕçлесе панă. Машинăпа трактор станцисенче ан-

Епĕр акă мĕн тăватпăр

ШУПАШКАР. Сталинла Конституципе „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" вĕренес тĕлĕшпе Стройтрест çумĕнчи парти организацийĕ июлĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа политикăла-массăллă ĕçсем тума тытăнчĕ. Татăклă план туса хатĕрлерĕ, 22 пропагандист уйăрчĕ. Пур пропагандиссене те строительствăн пыракан вырăнсене çирĕплетрĕ. Кашни вунă кунра пĕрре пропагандиссемпе пĕрле профактив канашлувĕсем туса иртерчĕ. Ку канашлусенче çак пысăк ĕçе туса пырасси çинчен кăтартусем пачĕ.

Июлĕн 7-мĕшĕнчен июлĕн 23-мĕшчен суйлав Положенине вĕренессине вуласа тата каласусем туса иртерсе пычĕç.

Июлĕн 23 мĕшĕнчен, ПСК(б) Партин хула комитечĕ панă кăтарту тăрăх, суйлав Положени çинчен ăнлантарса парассине урăхла туса пыма тытăнчĕç, вуласа парассинчен тата каласусем туса иртерессинчен кружоксенче вĕренесси çине куçрĕç. Кружок заняттийĕсен планĕсене турĕç. Кружоксене йертсе пыма 28 çын уйăрчĕç. Кружок руководителĕсемпе тата профактивпа пĕрле виçĕкунлăх семинарсем пулчĕç, вĕсенче 41 çын вĕрентсе кăларчĕç. Кашни руководитĕл аллине кружоксен заняттийĕсене иртермели плансем пачĕç.

Июлĕн 27-мĕшпе августăн 21-ш кунĕсем хушшинче суйлав саккунне вĕренмели 22 кружок ĕçлерĕç, 79 занятти иртерчĕç, строительствăри рабочисене 902 çын йавăçтарнă. Унпа пĕрлех баракра пурăнакан рабочи арăмĕсене „Положени" çинчен кружоксенче вĕрентнĕ.

Йулашки вăхăтра суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе тата хытăрах ĕçлемеле пулчĕ. Тепĕр хут пропагандиссемпе канашлу туса, унта организацилĕ ыйтусем пăхса тухрăмăр. Унтанпа кружоксен заняттийĕсене рабочисен общежитийĕсенче иртерме пуçларĕç. Малтанхи 22 кружок вырăнне 34 кружок ĕçлеме тытăнчĕ. Кашни кружокра 4-шер занятти иртерчĕç. Вăл кружоксене рабочисемпе вĕсен арăмĕсене 830 çын йавăçтарчĕç.

Кружоксене. çÿрекенсен хисепĕ 80 процента çитет. Активлăх ÿсрĕ. Вĕреннĕ вăхăтра нумай ыйтусем пама пуçларĕç. Вăл ыйтусем çине кашни татăклă, ăнланмала ответ илет.

Кружоксемсĕр пуçне строительсен клубĕ çумĕнче справка бÿровĕ организациленĕ. Унта кашни кулĕн справкăсем, консультацисем пама дежурнăй тăрать. Справкăсем, консультацисем илме çынсем сахал çÿрессĕ-ха, кашни кун 3—4 çынтан ытла пымасть.

Пирĕн умра суйлав кунĕччен кашни суйлавçăна „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" кирлĕ таран тĕплĕн вĕрентсе çитересси пулать.

Чиганайов.

Хĕллене хатĕрленес ĕçсене кĕске срукра туса çитермеле

СĔНТĔРВĂРРИ. Малта пыракан колхозсем выльăхсене хĕл каçарма ăшă çанталăкра хатĕрленсе çитесçĕ, лаша витисене, ферма витисене йусаççĕ. Прамнĕк йачĕпе тăракан колхозра выльăхсене хĕл каçарма утă, улăм, сĕлĕ çителĕклĕ хатĕрленĕ. Кунсăр пуçне çулахи вăхăтра 200 лав çулçăллă апат, йавăç турачĕсем хатĕрленĕ. Вăрманти курăксене пуçтса 150 тоннă силос хывнă.

Аксаринти „Красная Етна" колхоз выльăхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленет. Выльăхсем валли çителĕклĕ утă, улăм хатĕрленисĕр пуçне çĕрулми çеçкинчен 80 тонна силос хывнă, 50 лав ытла йăвăç турачĕсем касса хатĕрленĕ. Çулахи ăшă çанталăкра 45 лаша вырнаçмалăх витене йусаса лартнă, халĕ 25 ĕне вырнаçмалăх вите тума тытăннă. Çаксемпе пĕрлех Шупкари „Красный Труженик" колхоз 24 лаша валли, Истерек-кассинчи „Майăн 1-мĕш" колхоз 70 сурăх вырнаçмалăх ăшă та сухă витесем туса çитереççĕ. Уй-Пилемĕчри „Опыт" колхоз уйрăм бригадă организацилесе 30 лаша вырнаçмалăх витене йусарĕ. Унпа пĕрлех тата 25 ĕне вырнаçмалăх ăшă вите туса çитереççĕ.

Районри пур колхозсенче те ĕç кун пек аван пырать теме çук. Наратчăккинчи „Красное Сормово" колхоз (председателĕ Сапожников) 40 лаша вырнаçмалăх, Акшикри „Паттăр" колхоз (председателĕ Михайлов) 25 ĕне вырнаçмалăх витесене икĕ çул хушши ĕçлесе те туса пĕтерейменççĕ. Выльăхсене сивĕ сарайсенче хĕл каçараççĕ. Кĕчкейри „Дружба" колхозра ĕне фермипче выльăхсене хĕл каçарас тĕлĕшпе нимĕн те туман. Ĕнесене валли йатарласа тунă ăшă вите çук. Выльăхсене валли апат хатĕрлес тĕлĕшпе те нимех те туман. Шăпчăккассинчи „Трудовик" колхозра та выльăхсене хĕл каçарма йапăх хатĕрленеççĕ. Хĕл каçарма йатарласа тунă витесем çук. Кив витесене те йусамаççĕ. Витесенче тĕттĕм, шăтăк-хушăксем темĕн чухлех, йĕри тавра канав чавса çавăрăнман. Çавăн пирки çăмăрсем çусанах витесене шыв кĕрсе кайать.

Вăта Пукашри „Советская деревня" колхоз ĕнесем валли вите тума тăрăшмасть. Ĕнесене уйрăм колхозниксем патĕнче сивĕ сарайсенчех усрать. Колхозăн витĕ тума кăçалхи çул вăй çитет, анчах тавасси çинчен шутламаççĕ. Колхоз председателĕ Л. Коротков:—вăкăрпа такасене хам патăмрах усратăп, ыттисем колхозниксем патĕнче хĕл каçкалĕç-ха,—тесе пысăк йăнăш тăвать.

Кун пек çитменлĕхсем вĕсем чи малтанах колхоз руководителĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕçне хакламаннинчен, хуçасăрлăха пĕтерме тăрăшманнинчен килеççĕ. Выльăх чĕрлĕхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕç çине тÿнтерле пăхассине пĕтермеле. Çакăнпа пĕрлех выльăхсене шăвармалли çăлсене те лайăх шыв паракан туса, хÿтлĕхсем туса лартмала. Чи кĕске вăхăтсенче хĕлене хатĕрленес ĕçсене туса пĕтермеле.

Зоотехник П. Василйев.

Шăхасан районĕнчи „Новый Путь" колхоз пысăк тухăçлă тырпул çапса илет.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Пуйан пурнăç

ЕЛĔК. Урпашри „Хастар" колхоз кăçалхи пек вăйлă тырпул нихăçан та туса илмен. Кăçал кашни ĕçкунĕ пуçне тăхăршер килограм тĕштырă валеçĕнет. Çавăн пекех Тавăтри „Сталинит" колхозра та пĕр ĕçкунĕ пуçне 8 килограм тĕштырă тивет. Георгий Андрейев колхозник çемйи 550 пăт, Игнатий Никитин çемйи 450 пăт тĕштырă илеççĕ.

— Колхоз мана çын турĕ. Колхоза кĕриччен манăн тырпул нихăçан та хире-хирĕç çитсе пыман. Акă кăçал 550 пăт илетĕп. Спасибă Сталин йулташа пирĕн пек чухăн хресченсене тулăх пурнăç туса панăшăн,—тет Г. Андрейев йулташ.

Ив. Маркелов.

Çамрăксем уйава хатĕрленеççĕ

ÇĔРПӲ. Паваркассинчи „Хĕрлĕ Павари" колхоз çумĕнчи комсомолăн пуçламĕш организацийе шкул çумĕнчи комсомол организаци Аслă Социалисăмлă революци 20 çул тултарнă уйава пĕрле хатĕрленсе кĕтсе илеççĕ.

Комсомолецсем халь „Айдар" пйесăна лартма хатĕрленеççĕ. Çавăнпа пĕрлех вĕсем уйав валли тĕрлĕрен лозунгсем, плакатсем çыраççĕ. Йалта шавлă оркестр организациленĕ.

Колхоз клубĕнче ернере икĕ кăç куллепхи по игикăна вĕренмели кружок ĕçлет. Кружок занятине йалти пур çамрăксем те интересленсе çÿреççĕ.

В. Андрейев.

Кашни пионерăн виçшер оборонă значокĕ пулать

ЙĔТĔРНЕ. Епĕр, Йаракассинчи туллимар вăтам шкулта вĕренекенсемпе пионерсем, кашнийех виçшер оборонă значокĕ илме хатĕрленетпĕр. Шкул ачисемпе пионерсем хавасланса кружоксене çырăнчĕç. Винтовкă çинчен тата противогаз çинчен вĕренме пуçларăмăр ĕнтĕ. Заняттисем хĕрÿлĕн иртеççĕ.

П. Михайлов.

Пурнăç тулашĕнче тăракан библиотека

Сĕнтĕрвăрринчи райбиблиотекăра кĕнекесемпе журналсем питех те сахал. Акă халĕ пĕтĕм халăх ССР Союзĕн Конституципе „Аслă Совета суйламалли Положенине" вĕренет. Анчах библиотекăра ку тĕлĕшпе нимле материал та тупса вулама çук. Çавăн пекех хаçатсем те йĕркелĕ килсе тăмаççĕ. Хăш вăхăтра хаçатсар ларни те пулкалать. Библиотекăра мĕнле кĕнекесем пуррине пĕлме хĕн, мĕншĕн тесен кунта çĕнĕ каталог çук.

Тĕрĕссипех каласан, библиотекă общĕствăллă пурнăç тулашĕнче тăрать.

Н. Архипов.

„Айдар"— колхоз сцени çинче

ÇĔРПӲ. Йантушри „Çамрăк вăй" колхоз çумĕнче драмкружок ĕçлеме пуçлани икĕ çул çитрĕ. Икĕ çул хушшинче драмкружок нумай пйесасем выляса пачĕ.

Кружок ĕçлеме пуçлани 2 çул тултарнă йатпа, колхоз артисĕсем клубра Осиповăн „Айдар" драмине лартрĕç. Спектакль курма халăх нумай пуçтараннă. И. Дмитрийевпа В. Башмаков йулташсем хăйсен ролĕсене уйрăмах аван выляреç.

Б—в.

Пĕтĕм Союзри çăмăл атлетикă ăмăртувĕ

Аслă Социалисăмлă революци 20 çул тултарнă уйава хатерленнĕ тата Хĕрле çара кайакан 1915—16 çулсенче çуралнă çамрăксене кĕтсе илнĕ май, „Спартак" спорт обшчĕстви октаберĕн 24-мĕшĕнче Мускавпа Тарасовкă хушшинче Пĕтĕм Союзри çăмăл атлетикă ăмăртувĕ туса иртернĕ.

Ăмăртува пĕтĕмпе 45 команда хутшăнна. Чăваш республикĕн команди Пĕтĕм Союзри ăмăртура 13-мĕш выран йышăннă. 28 километр хушăна С. Бурашников 1 сехет те 47 минутра, Й. Леванов 1 сехет те 54 минутра, Т. Петров 1 сехет те 55 минутра, Майоров 2 сехет те 8 минутра тата Сапожников 2 сехет те 28 минутра чупса тухнă.

Хĕрсен конференцийĕ

Октаберĕн 25-мĕшĕнче Йĕтĕрнере хĕрсен районри конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференцинче райĕçтăвком председателĕ Марков йул. ССР Союзĕн Аслă Советне суйлас кампани çинчен доклад туса пачĕ. Доклад тăрăх тухса каласакансем нумай пулчĕç.

— Пайанхи конференципе епĕр ытах та савăнатпăр. Ĕлĕк хĕрарăмсем çакăн пек пухăнса каласма пултарайман, хĕрарăм çын вырăнне пулман, кăмака кукринчен те тухма пĕлмен. Октабĕр революци çеç пире нушаран хăтарчĕ. Пире ирĕклĕ, савăнăçлă та пуйан пурнăç туса пачĕ. Хĕрарăм халь арçынпа пĕртан правалă. Халь пирĕн ĕçлев, вĕренÿ, кану, суйлав прависем пур. Акă мĕнле хальхи пурнăç! Тав çакăн пек телейлĕ те савăнăçлă пурнăç çулĕ çине кăларакан çулпуç Сталина!—тет Анат Ачакри Петрова йулташ.

Ф. Захаровă (Пушнар) йалти çамрăк хĕрсем хушшинче ĕçлеменни, вĕсене комсомола йавăçтарас ĕçе хакламанни çинчен калать.

Орла-Павловăри М. Прошкаловă çамрăксене комсомола йавăçтарасси, вĕсемпе ĕçлессине йалта хак хуманни çинчен калать.

— Пирĕн йалта,—тет вăл,—районри работниксем сахал пулаççĕ. Пире кăтартусем, пулăшусем памаççĕ. Комсомол райкомĕн работникĕсем те ку тăринччен хĕрарăмсем хушшинче ĕçлессипе интересленмен. Райкомолăн çакна шута илмеле.

Тухса каласакансем татах та нумах пулчĕç. Райкомол работникĕсем çамрăк хĕрсем хушшинче ĕçлеменни çинчен ытларах каларĕç.

Райкомол çамрăк хĕрсем хушшинчи ĕçе начар туса пынă, тесе йышăнчĕ конференци.

Йулашкинчен конференци çакăн пек резолюци йышăнчĕ:

Кашни колхозра çамрăк хĕрсен слётне туса иртерес, кашни çамрăка суйлав Положенине вĕренмели кружока йавăçтарас; колхозри пуçламĕш комсомол организацисене йаланах пулăшса пырас; çамрăк хĕрсене комсомола йавăçтарас ĕçе тивĕçлипе туса пырас; колхоза кĕмен çамрăк хĕрсене колхозра кĕртессишĕн тăрăшса ĕçлес; кашни çамрăк хĕр хаçат-журнал çырăнса илтĕр.

Конференцине килнĕ çамрăк хĕрсем çÿлте асăннисене пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшса ĕçлеме пулчĕç.

Ник. Цветков.

Тĕл пересси пе мала тухассишĕн

Социалисăмла Аслă революци пулни 20 çул тултарнă уйава хатĕрленнĕ май, Чăваш республикĕнчи „Спартак" обшчестви сборнăй командипе Хусанти командăсем хирĕç пулса пăшал пересси пе ăмăрту пулса иртрĕ. Ăмăртура Шупашкарти арçынсен сборнăй командийĕ Барский, Бек, Паулин, Енчиков, Андрейев тата ыттисем те, виçĕ упражненипе (выртса, чĕркуçи çинче тата тăрса) 50 метртан 7-мĕш номĕрлĕ мишене 1949 очко тивертнĕ. Хусансем 1502 очко тунă.

Шупашкарсен хĕрарăмсен (сборнăй) командийĕ — Лагуцина, Енчикова, Барскайа, Дементйева, Митрофанова чĕркуççи çине ларса 50 метртан 7-мĕш номерлĕ мишене 527 очко тивертнĕ (хусансем — 247 очко).

Шупашкарти метал заводри командă тата Промсоюз команди паллă вырăн йышăнчĕç. Моровин, Йуркин, Шапошников, Терентйев, Йевсейев выртса 50 метртан 354 очко, хусансен „Точмех" ертел командийĕ — 303 очко илнĕ.

Арçынсен командийĕсенче чи мала тухнисем (Борский — Леспромсоюз—419 очко). Хусансен Зейдинов 364 очко тунă. Хĕрарăмсенчен Лагуцина („Спартак") 122 очко, хусансен командинчен Горйачева — 95 очко тунă.

Çапла вара Чăваш республикĕн команди пĕтĕмпе 2830 очко, Тутар республикĕн команди 2052 очко пулнипе чăвашсем тутарсенчен 778 очко выляса илнипе ăмăрту пĕтнĕ.

Çĕнĕ специалиссен отрйачĕ

Хусанти В. И. Ленин йачĕпе хисепленекен Государствă Университечĕ кăçал нойабĕрĕн пĕррĕмĕшне тĕрлĕ отрĕçлĕпе ĕçлекен çĕнĕ специалиссен отрйадне вĕрентсе кăларать. Географи факультетĕнчен — 7 студент, физикăпа математикă факультетĕнчен — 66 студент, хими факультетĕнчен — 6 студент тата биологи факультетĕнчен — 2 студент вĕренсе тухаççĕ. Вĕсем хушшинче чăвашсем те пур.

Вĕренсе тухакан студентсенчен нумайĕшне ăслăлăхпа тĕпчев ĕçне йавăçтарнă пулнă. Хусан хулинче пулса иртнĕ çамрăк ăслăлăх работниксен конференцийĕнче 5 студент, тĕрлĕ ыйтусем тăрăх докладсем туса панă. Студентсен пала ĕçĕсем çинчен çак тĕслĕх те аван кăтартса парать: физикăпа математикă факультетĕнчи 11 студентăн, биологи факультетĕнчи 6 студентăн тата географи факультетĕнчи 5 студентăн ăслăлăх тĕлĕшпе çырнă ĕçĕсене пичетре кăлармала тунă.

Государствă Университетĕнчен вĕренсе тухнă студентсем Совет Союзĕн тĕрлĕ республикисене ĕçлеме кайаççĕ.

Наган Васлейĕ.

Колхоз çирĕпленни тăшмансене кÿрентерет

Ишекри Сталин йачĕпе тăракан колхоз çултан çул ÿссе çирĕпленсе пырать. Ĕлĕк Ишек халăхĕ пупсемпе кулаксен пусмăрне çеç тÿссе пурăннă пулсан, халь колхозниксем пуйан та культурăллă пурнăç çулĕ çине çирĕппĕн тăчĕç. Колхозниксем тăрăшса ĕçлени ахаль иртмерĕ, ĕçкунĕ пуçне кăçал колхоз 10-шер килограм тĕштырă валеçет. Чылайĕшĕ çемйипе 400—500-шер пăт тырă илеççĕ.

Анчах та, колхоз çирĕпленсе пыни клас тăшманĕсене хытă тарăхтарать, вĕсем колхоз ÿсĕмпе чакарассишĕн тĕрлĕ майсем шыраççĕ. Ишек таврашĕнчен тухнă ес-ер Альновăн контрреволюцилĕ ĕçĕсем çинчен пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Унăн йулашкийĕсем халĕ те пĕтмен-ха. Акă, Альновăн агитатăрĕ пулса ĕçленĕ Миронов Василийе илер. Вăл тата унпа пĕр шухăшлă пулса ĕçленĕ Ишекри врач Мамутин 1928 çулта Ишек халăхне пăтратма тăначчĕ. Вĕсене ун чухне вăхăтра тăрă шыв çине кăларса çапса хуçнă.

Миронов В. çавăнтан вара таçта айакра пурăнать, анчах вăхăтран вăхăта Ишеке пыра-пыра кайать. Ишеке вăл ĕç сĕрех пымасть,—кунта унăн хăйĕнпе пĕр шухăшлă ушкăн пур. Ишек учителĕ Ильухин Александр çав Мироновпа йалан сыхăну тытать, пĕр-пĕрин патне çырусем çÿретеççĕ. Кам-ха вăл Ильухин? Вăл 12 çул чиркÿ старости пулса çÿренĕ çын ывăлĕ. Патша вăхăтĕнче офицер пулнă, шуррисем Хусана илнĕ чух Хĕрлĕ çара хирĕç çапăçнă. Çаксемпе пĕрлех йалсовет секретарĕ Курбатов П. тата Ишекри перекет касси пуçлăхĕ Карменейов ĕçлеççĕ. Курбатов кулак кĕрÿшĕ. Вăл кулак халь те спекуляци тăвас тĕлĕшпе ĕçлет, укçатенкĕ куçарас—парса илес ĕçе перекет касси пуçлăхĕ Карменейов урлă туса пырать. Çавсемех тата пединститутра троцкисла ушкăнта тăнăшăн хăваласа йанă Степанăв Иванпа сыхăну тытаççĕ, çырусем çÿретеççĕ.

Ильухин та, Курбатов та, Карменейов та колхоза хирĕç вăрттăн ĕçлеççĕ. Колхоз хорĕнче йурлакансене Ильухин пурĕ 1000 ĕçкунĕ ыйтма хушнă. Çавăн чухлĕ ĕçкунĕ памасан хор саланать, теме хушнă. Карменейов 1934 çулта колхоз ферми пуçлăхĕ пулса ĕçленĕччĕ. Вăл ун чухне выльăх апатне тирпейсĕр тыткаласа, çур хĕле çитиччене апата çитерсе пĕтерсе, выльăхсене выçă вĕлерсе, колхоза сăтăр тума тăнă. Анчах ун чухне унăн ĕç тухмарĕ. Иртнĕ çулта вăл хăй машинист пулса ĕçленĕ чух молотилкăна та, жнейкăна та йуришех сĕмĕрнĕ.

Çакăн пек çынсем шкулта, йалсоветĕнче тата перекет кассинче ĕçленипе тÿрĕ колхозниксем никăпле те килĕшме пултараймаççĕ. Вĕсене тăрă шыв çине кăларса, Альновăн Ишекре йулнă хăрăк тымаррисене кăкласа тасатмала.

Колхозниксем.

густăн 1-мĕшне 356,8 пин трактор пулнă, вĕсен вăйĕ 6.511,6 пин лаша вăйĕ чухлĕ. Тракторнăй парк та хыттăнах ÿлшăнчĕ. 1935 çул пуçламĕшĕнче машинпа трактор станцисенче пĕтĕмпе 5.085 гусеничнăй трактор пулнă, 1937 çулхи августăн 1-мĕшне 41.368.

Иртнĕ çуракире тракторсемпе 82 процент сухаласа акнă, сĕртме сухи—76,1 процент тунă.

1937 çулти августăн 1-мĕшне колхозсенче 96,3 пин комбайн ĕçленĕ. Кăнтăр районĕсенчи колхозсенче пучахлă тырăсенчен 80 процентне комбайнсемпе пуçтарса кĕртнĕ.

1937 çулхи августăн 1-мĕшне колхозсенче 56 пин грузовой машинсем ĕçленĕ (машинпа трактор станцисенче тăракан автомашинĕсем).

Ĕлĕк хресчен акса тăвакан пĕр гектар çĕр пуçне йалхуçалăх машинĕсемпе орудисем 6 тенкĕлĕх тивнĕ пулсан, 1936 çулта вара колхозсемпе совхозсем акса тăракан пĕр гектар çĕр пуçне йалхуçалăх машинĕсемпе орудисем (тракторсемпе, комбайнсемпе, автомобилсемпе пĕрле илсе шутласан) 46 тенкĕлĕх пулнă. Ĕлĕк, патша Российĕнче, промышленнăç йалхуçалăх машинĕсемпе орудисем çулталăкне 55 мĕлйун тенкĕлĕх кăларнă (1926—27 çулти хакпа шутласан), 1936 çулта пирĕн вăйлă та хăватлă социалисăмлă индустри йалхуçалăх машинĕсемпе орудисем (тракторостройенипе пĕрле илсе шутласан) 2.260,8 мĕлйун тенкĕлĕх кăларнă (1926—27 çулхи хакпа шутласан). Тракторсем, комбайнсем, автомашинăсем, йалхуçалăхне кирлĕ тата ытти шултра машинсемпе орудисем кăларакан пысăк заводсем туса лартнă.

Капиталисăмла çĕршывсенче машинă вак хресчен хуçалăхне йухăнтарать, сийен кÿрет, вăйсăрлатать. Ун пек мар пирĕн патăрта. Совет Союзĕнче шултра машинă хресчене пуйан та культурăллă пурнăç кÿрекен вăй пулса тăчĕ.

Шултра машинăлă техникăпа пысăк кăн усă курнипе пула, социалисăмлă системăна пула пирĕн йалхуçалăхĕнче тырпул туса илесси çултан çул ÿссе пырать.

Колхозниксемпе совхоз рабочийĕсем Сталин йулташ 7—8 мĕлйард пăт тырă туса илесси çинчен кăтартса панисене пурнăçа кĕртессишĕн ăнăçлăн кĕрешеççĕ. 1937 çулта уйрăмах вăйлă тырпул туса илтĕмĕр. Малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, кăçалхи тырпул тухăçлăхĕ 6,8 мĕлйун пăта çитет. Ĕлĕк, революциччĕнхи вăхăтра, пирĕн çĕршывра пурĕ те 4—5 мĕлйард пăта йахăн кăна тырă тунă.

Йалхуçалăхĕ 1937 çулта паракан продукци 1913 çулхи хисепрен икĕ хут иртет. 1913 çулта çĕрмамăкĕ 7,4 мĕлйун центнер тунă пулнă, 1936 çулта вара 23,9 мĕлйун центнер; йĕтĕн сÿсĕ 1913 çулта 3,3 мĕлйун центнер тунă, 1936 çулта вара 5,3 мĕлйун центнер; сахăр кăшманĕ 1913 çулта 109 мĕлйун центнер тунă, 1936 çулта вара 168,3 мĕлйун центнер. Пирĕн текстиль промышленнăçĕ йутçĕршывсенчен çĕрмамăкĕ кÿрсе килес ĕçрен пĕтĕмпех хăтăлчĕ.

Хăвăрттăн ÿсет выльăх-чĕрлĕх ĕçĕ. 1932 çулта выльăх-чĕрлĕх фермисем 62 пин пулнă, 1937 çулта вара (йанварĕн 1-мĕшне)—371 пин. Халĕ çак фермăсенче вуншар мĕлйун пуç выльăх шутланать.

Государствă колхозниксене выльăхсем туйанас ĕçре пысăк пулăшу парать. Йулашки тăватă çул хушшинче (1933—1936 ç. ç.) совхозсем колхозсемпе колхозниксене йÿнĕ хакпа тата кĕтмеле çинчен 1.118 пин ĕнесемпе пăрусем, 1.546 пин сыснасемпе çурăсем, 2.393 пин сурăхсемпе путексем сутнă. Колхоз фермисем колхозниксене йÿнĕ хакпа тата кĕтмеле кивçен укçа парса 1.408 пин ĕнесемпе пăрусем, 10.696 пин сыснасемпе çурăсем, 3.237 пин сурăхсемпе путексем сутнă.

Колхоз строительствин пуйан опычĕ çакна кăтартать: колхозниксен харпăрлăхĕ çын ĕçне експлоатацилеме май памасть, вăл социалисăмла колхоз харпăрлăхне пулăшса тăракан елемент пулать.

Сталин йулташ пĕр хут çеç мар: колхозсене тĕреклетмели çăраÿççи вăл—колхозниксен хăйсен интересĕсене колхозсен общĕствăллă интересĕсемпе çыхăнтарса пынинче пулать, тенĕ. Йалхуçалăх ертелĕн уставĕ—колхоз пурнăçĕн саккунĕ—çак задачăна пĕтĕмĕшпех татса парать.

Нумайрах та нумайрах колхозсем пуйанланса пыраççĕ. Социалисăмла ĕçлев хăйĕн çимĕçне кÿрет.

Акă тĕслĕхрен пĕр колхоз промтаварсем илме панă заказ. Мĕнле таварсем илме заказ пани хăйех колхозла çĕнĕ пурнăçа кăтартса парать. Кийĕв облăçĕнчи Уман районĕнчи „Третий решающий" колхоз патшалăха тырă сутса тунă укçапа кооперацирен çакăн пек таварсем илме заказ панă: виçĕ тоннăлă грузовой автомашинă, 20 велосипед, тÿмтир 65 пин тенкĕлĕх, мануфактурă 44 пин тенкĕлĕх, ата-пушмаксем 6 пин тенкĕлĕх, нефтяной двигател, динамомашинă, 4 жнейкă, 4 лашалă кĕрепле, 70 кубометр йăвăç, пĕр тоннă хĕçтимĕр, пĕр тоннă сортовой тимĕр, пĕр вакун етернит, пĕр тоннă цемент, пĕр тоннă пăта, 4 центнер пралук, 3 тоннă бензин, 6 автопокрышкă.

Совет хресченĕ пуйан та культурлă пурнăç çулĕ çинче пĕрмайах малала пырать. Темĕн чухлĕ çĕнĕ шкулсем, ача йаслисем вулав çуртĕсем, клубсем тăваççĕ. Йал лайăхланса пырать. Електричествă кÿртеççĕ. Колхозник килĕнче халĕ ĕнтĕ радио йаланхи ĕç пулса тăчĕ.

Хулапа йал хушшинчи хирĕçÿсем ăнăçулăн пĕтсе пыраççĕ. Колхоз хресченĕсем хушшинче хăвăрттăн интеллигенци ÿсет. Нумай колхозниксем аслă шкулсенчен вĕренсе тухрĕç. Колхозсенче халĕ ĕнтĕ индустрилĕ ĕç работникĕсем вуншар, çĕршер пинĕн шутланаççĕ.

Акă хăшпĕр тĕслĕхсем. Епĕр кунта Пĕтĕм Союзри Советсен Чрезвычайла VIII-мĕш Сиесĕнче пулнă хресчен-депутатсен йышĕ çинчен калакан паллăсене илетпĕр.

Сиес депутачĕсем хушшинче хресченсенчен: трактористсем 13 проц., комбайнерсем 8 проц., колхоз председателĕсем 26 проц., бригадирсем 10 проц., звенийевойсем 20 проц., выльăх-чĕрлĕх ферми пуçлăхĕсем 6 проц., ĕне сăвакансем, пăру пăхакансем, сысна пăхакансем 12 проц., чабансем 2 проц., чей, çĕрмамăкĕ тата ыт. техниклă культурă пуçтаракансем 3 проц. пулнă. Çаксем вĕсем: „Совет хресченĕ вăл—пĕтĕмпех çĕнĕ хресчен, унашкал хресченсене етемлĕх историйĕ ку таринччен пĕлменни" çинчен калаççĕ.

* * *

Капиталисăм саманинче пĕрисем пуйасси—теприсем çукка, чухăна, выçса йулассипе пулса пырать. Çакăн пек капиталисăмăн кашкăрла саккунĕ. Колхоз стройĕ пур колхозниксене те колхозра тÿрĕ ĕçленипе хăйсен пурнăçне лайăхлатма, культурлăхне хăпартма май парать. Пирĕн çĕршывра çынна çын експлоатацилессине йалаанлăхах пĕтернĕ. Социалисăмла ĕç колхозника хисеп тăвать, йат парать, пурнăçне лайăхлатать. Кашни колхозник: колхозра вăл пикамшăн те мар, хăйшĕн ĕçленине пĕлет, çавăнпа та вăл пур майсемпе те колхозăн пуйанлăхне нумайлатма тăрăшать.

Большевикла колхозсем тăвас ĕçре нумай çитĕнÿсемпе çĕнтерÿсем тунă. Анчах колхозсем чылайĕшĕ малта пыракан колхозсем пек ĕçлеймеççĕ-ха. Тăшманла, троцкисла кайашлăхсем колхоз строительствине сийен кÿме тăрăшаççĕ. Тăшмансене пĕр хĕрхенмесĕр тăрă шыв çине кăларса, вĕсен сăтăрла ĕçĕсене хайаррăн çĕмĕрсе тăкмала.

Колхозниксем колхоз стройне куç шăрçине сыхланă пек сыхлаççĕ. Ленинпа Сталин партийĕ тавра таччăн пĕтĕçнĕ совет хресченĕсем рабочи класпа пĕрле хăйулăн малала, ССР Союзĕн Аслă Совет суйлавĕ патне пыраççĕ.

Канашри туллимар вăтам шкул çурчĕ

Цыганов Фото-ÿкерчĕкĕ.

„Сталин пирĕншĕн чи хаклă çын“

Мускаври Сталин районĕнчи суйлав умĕнхи пухусем

Столицăн Сталин районĕнчи пур предприятисенче те суйлав çăсен суйлав умĕнхи пухуйĕсем пысăк çĕкленÿпе иртеççĕ. Пухусенче Союз Советне депутата суйламали кандидатсене çинчен сÿтсе-явасçĕ. В. В. Куйбышев ячĕпе тăракан електрокомбинатри, Лепсе ячĕпе тата Фрунзе ячĕпе тăракан заводсенчи, „Проводник“, „Мастяжарт“, Буденный ячĕпе тăракан заводсенчи, районри тата ытти предприятисенчи пухусенче те партире тăман рабочисем, инженерсем, техниксем пит активлă тухса калаçнă.

Сталин округĕнчи суйлав умĕнхи канашлура пулнă представительсем, Сталин суйлав округĕнчи ĕççынисен представительсене суйлав умĕнхи канашлуне пурте пĕр саслан халăхсен çулпуçне Иосиф Виссарионович Сталин йулташа Союз Советне кандидата тăратни çинчен, Сталин йулташа Сталин суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтни çинчен каласа пĕлтернĕ. Вĕсем пелтерни-не суйлав умĕнхи пухусенче пулнисем пысăк хавасланса йышăннă.

Мускаври инструментальнăй заводри партире тăман рабочи Орлов йулташ хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă:

— Епĕ Сталин йулташăн са сăлатăп, мĕншĕн тесен, вăл Ленин тупăкĕ умĕнче тупатуса каланине пурнăçа кĕртрĕ. Сталин пирĕншĕн чи хаклă çын.

* *

Мускаври Совет суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу октябрĕн 27 мĕшĕнче Союз Советне депутата суйламали кандидата Сталин, Молотов, Каганович, Ворошилов, Калинин, Йежов, Хрущов тата Федорова (метрора ĕçлекен паллă стахановка, рабочи хĕрĕ) йулташсене, Национальнăйсене Советне депутата суйламали кандидата Сидоров (Мускав Совечĕн председателĕ) тата Булганин йулташсене тăратнă.

(ТАСС).

Çĕршывăн чи лайăх çыннисем— ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйламали кандидатсем

АЛЕКСЕЙ ГРИГОРЙЕВИЧ СТАХАНОВ

Артем ячĕпе тăракан 10-мĕш №-лĕ шахтăри (Ворошиловск хули. Донецк облаçĕ) рабочисемпе работницăсен, инженерсемпе техниксен пĕрлехи пухуйĕ Алексей Григорйевич Стаханов йулташа Ворошиловск суйлав округĕнчен Союз Советне депутата суйлама кандидата тăратнă. Алексей Григорйевич Стаханов — чи лайăх заб бойщик, Сталин йулташ пăхсă ÿстернĕ çын, орденоносец, большевик.

ФЕДОР ИЛЛАРИОНОВИЧ КОЛЕСОВ

Погромено машинă-тракторлă станцинчи рабочисен тата служащисен коллективĕ (Оренбург облаçĕ), тимĕрç Михаил Толмачов йулташ сĕннипе, çĕршыври паллă комбайнер-орденоносеца — Федор Илларионович Колесов йулташа Союз Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

Ф. И. Колесов йулташ — 1899 çулта çуралнă. Иртнĕ вăхăтра вăл Погромено ялĕнчи чухăн хресчен пулнă. 1933 çултанпа комбайнер, пулса ĕçлет. 1935 çултах вăл хăйĕн машинĕпе 751 гектар çинчен тырпул пуçтарса кĕртнĕ. 1936 çулта Колесов йулташ, икĕ „Сталинец“ комбайнсене кăкарса ĕçлесе, 2 691 гектар çинчен тырпул пуçтарса кĕртнĕ. Колесов йулташа Ленин орденĕ панă. Нумай пулмасть вăл Тоцк райĕçтавкомĕн председательне суйланă. Колесов йулташ 1931 çултанпа ПСК(б)П членĕ.

ТРОФИМ ДЕНИСОВИЧ ЛЫСЕНКО

Шевченко ячĕпе тăракан йалхуçалăх ертелĕнчи колхозниксем (Одесса облаçĕнчи Новоархангельск районĕ) академик-орденоносец Трофим Денисович Лысенко йулташа Союз Советне депутата суйлама кандидата тăратнă. Суйлав умĕнхи пухура Василий Кашуренко колхозник çапла каланă:

— Пайан пирĕншĕн пысăк савăнăçлă кун. Епĕр, колхозниксем, Союз Советне суйлама кандидатсем тăратапăр. Кандидата хамăрăн социализмла тăван çĕршыван чи лайăх çыннисене тăратмалла. Епĕ Союз Советне депутата суйлама паллă учонăй-орденоносец — Трофим Денисович Лысенко академик кандидатурине тăрататăп. Академик Лысенко пирĕн йалхуçалăхĕне пысăк ĕçсем туса ирттернине колхозниксем пурте лайăх пĕлеççĕ. Йалхуçалăхĕнче унăн большевиклă метăчĕсемпе ĕçленипе, пирĕн колхозсем уйхирĕсем вăйлă тырпул пăрасçĕ.

(ТАСС).

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн командирĕсене Совет Союзĕн Геройĕ йатне парасси çинчен

ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ çапла йышăнат:

Совет Союзĕн оборонă хăватне тĕреклетес тĕлĕшпе правительствăн специальнăй заданийĕсене образецлă пурнăçа кĕртнĕшĕн тата вăл ĕçе тунă чухне геройла пулнăшăн Совет Союзĕн Геройĕ йатне парас:

1. Иван Иванович Йевсейев полковнике;

1. Иван Трофимович Йеремейко капитана;

3. Федор Кузьмич Ковров кĕçĕн командире.

ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн председателĕ М. КАЛИНИН.

ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн секретарĕшĕн — ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕн членĕ А. АНДРЕЙЕВ.

Мускав, Кремль,
1937 çулхи октябрĕн 28-мĕшĕ.

Октябр уйавĕ умĕнхи социализмла ăмăрту

Октябр уйавĕ умĕнхи социализмла ăмăртура хутшăннă предприятисем, колхозсем тата совхозсем Октябрти социализмла Аслă революци 20 çул тултарнă уйава производствăлла çĕнĕ çĕнтерÿсемпе кĕтсе илеççĕ.

Карагандари Горький ячĕпе, Калинин ячĕпе тăракан 7 №-лĕ, 19 №-лĕ тата ытти шахтăсенче ĕçлекен горнякесем Октябр умĕнхи ăмăртура хутшăнса, йулса пынине пĕтерсе çее мар, производствăлла задание иртерсе те тултарма пулнă.

Майнефт промыслĕнче Октябр революци 20 çул тултарнă уйав ячĕпе пысăк стахановла уйăхлăх пысăк çĕкленÿпе иртет. Трест талăкра нефт кăларассине йулашки икĕ вунă кун хушшинче планлă заданирен ирттернĕ.

Азербайджанри колхозсенче Октябр умĕнхи социализмла ăмăрту анлăн саралнă. 150 колхоза йахăн государствăна çĕрмамăкĕ тăрармалли çулталлăк планне çуркечесех тултарнă. Пĕр кунта норма тăрах 35—50 килограм çĕрмамăкĕ пухмалла пулсан, ăмăртура хутшăннисем 100—250 килограм пухаççĕ.

(ТАСС).

Прагă хăçачĕсем ССР Союзĕнчи суйлав кампанийĕ çинчен

ПРАГĂ, октябрĕн 26-ш (ТАСС). ССР Союзĕнчи суйлав кампанийĕ мĕнле пынине пысăк интереспа сăнаса пыракан Прагă хăçачĕсем Совет Союзĕн тĕрлĕ хулисенче пулса иртекен суйлав умĕнхи пухусем тĕплĕ сведенисене пичетлесе кăларасçĕ. Кандидатсене сÿтсе-явассине тăратасси çинчен пысăк тимлĕхпе çыраççĕ. Мускаврипе Ленинградри предприятисем ССР Союзĕн Аслă Советне тăратнă кандидатурăсем — Сталин, Молотов, Каганович, Калинин, Жданов, Микоян тата Йежов йулташсем çинчен пичетлесе кăлараççĕ. Хăçатсем ССР Союзĕн Аслă Совет суйлавĕ пирки пысăк статйасем пичетлесе кăларасçĕ.

Йамашеври Йалпоăн Вăрман Йанишевăри 2 мĕш №-лĕ магазинĕ.

Цыганов Фото-Укерчĕкĕ.

Чăваш АСС Республик Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн октябрĕн 25-мĕшне кĕрхи çĕртме сухаласси мĕнле пынине кăтартакан

СВОДКИ

РАЙОНСЕМ	Плав (гектарпа)	Плана тултарнă (процентпа)	5 кун (20—25-Х) хушшинче хушăнвă (процентпа)	1936 çулта 25-Х пулнă
Улатăр . .	10700	81,0	6,8	86,9
Елĕк . . .	16000	52,5	13,1	97,8
Патăрйел .	16500	62,4	1,2	84,8
Вăрнар . .	17000	71,1	8,5	95,5
Йĕпреç . .	12500	76,4	13,2	106,8
Ишлей . .	13000	80,1	13,0	108,2
Канаш . .	11000	61,3	9,1	87,2
Куславкка .	12000	93,7	11,5	99,0
Кувакинă .	11000	110,5	3,8	61,2
Хĕрлĕ Чутай	11000	44,9	1,4	76,5
Сĕнтĕрвăрри	12500	73,0	3,1	89,5
Пăрачкав .	14600	78,0	19,9	72,2
Тăрхан . .	9000	56,7	5,0	79,9
Сутаркас .	15000	100,2	9,1	109,2
Граж . . .	14000	78,0	9,1	65,3
Вăрмар . .	18000	64,3	7,1	89,6
Çĕрпÿ . .	18430	83,3	12,0	102,2
Шупашкар	12000	71,1	4,7	101,1
Шăмăршă	9000	58,4	11,4	53,1
Шăхасан .	15000	76,3	13,0	106,0
Шăнкăртам	8500	92,3	2,6	95,1
Çĕмĕрле .	7500	55,1	8,7	1[illegible],2
Йетĕрне .	14170	73,5	0,5	100,7
Йелчĕк . .	18000	74,6	6,8	89,5
Тăвай . .	12000	85,1	—	92,1
ЧАССР-пе	328600	74,2	8,0	91,5

Гектартан 2.500 пăт кăшман

Йÿçкассинчи „Социализм“ колхозра (Елĕк районĕ) кăçал вылăх кăшманĕ питĕ вăйлă пулчĕ. Халĕ кăларсан пĕр гектартан 2 500 пăт вылăх кăшманĕ тухрĕ.

И. М.

ССРС Аслă Совечĕн Союз Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Улатăр Округ № 366 Суйлав Комиссийĕ

ПĔЛТЕРНИ

Чăваш АСС Республикĕнчен ССРС Аслă Совечĕн Союз Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Улатăр Округ №366 Суйлав Комиссийĕн адресĕ çапла: Улатăр хули, Ленин урамĕ, 60 мĕш № çурт.

Телефонсем № 220, 221, 223

Национальнăйсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Улатăр Округ № 503 Суйлав Комиссийĕ

ПЕЛТЕРНИ

Чăваш АСС Республикĕнчен Национальнăйсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Улатăр Округ № 503 Суйлав Комиссийĕн адресĕ çапла: Улатăр хули, Ленин урамĕ, 60-ш № çурт.

Телефонсем № 220, 221, 223.

1937 ç. нойабĕрĕн 3-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре

АСЛĂ СУД ÇУРТĔНЧЕ

Шупашкарти предприйатисенчи, учрежденисенчи тата организацисенчи бухгалтерсен, комсод председателĕсен, сурткер кооперативĕ йулташлăхĕсен председателĕсен тата финанс активĕсен канашлăвĕ пулат.

Кун йĕркинче: Октябр умĕнхи ăмăртуссен итогĕсем.

Обйавлени пымалла.

Хула финанс пайĕпе Государствăн Перекот кассин.

2—1.

Епĕр хамăр клуба хамăра тавăрса пама ыйтатпăр

Шăмăршăри хăма çуракан завода 1936 çулта рабочисем вальлă клуб туса лартрĕç. Анчах çĕнĕ клубпа рабочисен усă курайманрĕç, мĕншĕн тесен Шăмăршă райĕçтăвкомĕ рабочисен клубне туртса илсе банк кантурĕ туса хучĕ. Вахатлăха банк кантурĕ тунă клуб, пайанхи кун та банк аллинче. Пухусенче рабочисен клубне банк аллинчен илес тесе пĕрре кăна мар каласнă, анчах райĕçтăвком нимĕн те шарламасть. Профсоюз обкомĕн председателĕ Артемйев йулташ патне те çыру йанă. Вăл та нимĕнле пулăшу та параймарĕ.

Рабочисен пухуйĕ хушнипе пуху президиумĕ: А. Романов, С. Йефимов, Николайев, В. Корчагин, Г. Степанов.

Тĕрĕслене заметкăсем

„Сĕтел айĕн сутат“

Сентябрĕн 14-мĕшĕнче тухнă „Чăваш Коммунĕ“ хăçатра: „Вăрнар районĕнчи Кольцовка кооперативĕн лавкинче Алексей Кончаров лайăх таварсем килсен, вĕсене сĕтел айĕнчен сутса пĕтерет.

Август уйăхĕнче лавкана 7 мăшăр калуш, 8 майкă, тутăрсем илсе килчĕç. Çак Кончаров вăл таварсене, тутăрсемсĕр пусне, пĕрине те тавар илекенсене кăтартмарĕ. Сĕтел айĕнчен хăйсен тăванĕсене, пĕлĕшĕсене килĕ илсе кайса, 90 пус выранне, 1 тенке сутрĕ“, тесе çыраччĕ И. Йагодов йалкор.

Заметкăна Чăвашсоюзран вырăна тухса тĕрĕсленĕ. Заметкăра çырнă фактсем пĕтĕмĕшпех тĕрĕс пулнă. Кончарова ĕçрен кăларса суда панă.

„Мĕншĕн ачана пăхмаççĕ“

Йанкилтри „Большевик“ колхозри (Шăхасан р.) колхозница С. Харитонова колхоз бригадирĕ Николайевпа пурăнса ача суратнă пулнă. Николайев алимент тÿлесрен хăтăлас майпа Харитоновăна çамрăк ачана пăхмасăр вĕлерме хушнă. Харитонова Николайев хушнине тума пулнă. Харитонова ача вăхăтсăр суралнă, чĕчĕ ĕмме пĕлмест тесе йурийех пăхма пăрахнă. Çакăн çинчен çырнă çыру килнĕччĕ редакцине. Ăна тĕрĕслеме Чăваш республикĕнчи прокуратурăна йанăччĕ. Халĕ ку ĕçе тĕрĕслесе пĕтернĕ. Заметкăра çырнă фактсем тĕрĕс пулнă. С. Харитоновăна Уголовнăй кодексăн 136-мĕш статйипе, Николайевпа УК 17—136 статйине айăпласа уголовнăй ĕç пусарнă. Çакнашкал киревсĕр ĕç тума хăтланнăшăн суд пулинчен иккĕшне те тĕрмене хупнă.

ТЕМТЕПĔР

Тĕлĕнмеле нумай пулă тытни

Холмогор районĕнчи пулăçсем Михаил Бобреевпа Сергей Меньшиков ултă кун хушшинче 940 килограмм стерлядь тытнă. Çак кунсенче вĕсем 450-шер тенкĕ ытла ĕçлесе илнĕ. Пĕр кунĕнче пĕр Самолова кăна 320 килограм пулă лекнĕ. Кун пек пулă нумай тытнине пулăçăсем хăйсен ĕмĕрĕнче те курман. Пулă çав тери нумай кĕнипе темиçе хутчен сĕрекисем те çурăла-çурăла кайнă.

(„Правда севера“).

* * *

Çитăр çуттинчех кăтартакан кино

Кинофотопромышленнăçĕн асăилăхпа тĕпчев институчĕ (Р. И. Новицки доцент системи тăрăх) кăнтăр çуттинчех кăтартакан киноустановкă тунă. Çав установкăна каласкан киносене те, каласманнисене те кăтартма йурат.

Çĕнĕ аппарат картинăсене кăнтăрла кинотеатрсен чÿречисене хупламасăрах тата шкулсенче, паркесенче, санаторисенче, плошчĕдсенче те кăтартма май парат.

Социализмлă Аслă революци 20 çул тултарнă уйав вăхăтĕнче Мускаври плошчĕдсенче хăшпĕр картинăсене кăнтăрла кăтартма палăртнă.

(„Правда“).

* * *

Норвегирен Кемь çырмана

Нумайăх пулмасть, Кемь çырмара Поповпа Мельник пулăçсем Осло хулинчи (Норвеги) зоологи паркĕ паллă туса йанă семга тытнă. Унчен маларах Кемь, Выг, Поньгома çырмасенче, Шурă тинĕспе Баренцово тинĕсĕнче Ослори музей паллă туса, йанă семгасене 20 ытла тытнă.

Норвеги çыранĕсенчен пирĕн шывсене çитиччен 2.500 километр.

(„Правда севера“).

* * *

Пилĕк хутлă çурта куçарни

Мускаври Серафимович урамĕнче 5/16-мĕш № пилĕк хутлă çурта куçарма пуçланă. Çак çурт халь тăвакан Б. Каменнăй кĕпер трассин варринче ларнă. Çав вырăнтах ларсан малашне вăл урампа çÿреме чăрмантарма пултарат. Çавăнпа та ăна 74 метр Лабазнăй урам йенне куçараççĕ.

Çурта гидравлически домкратсемпе 1,85 метр çÿлĕне çĕкленĕ, айне рельсăсем сарнă. Хурçă трассăсем тăрăх, икĕ вуншар тоннăлă електродебĕтка ăна малтанах туса хатĕрленĕ фундамент çине шутараççĕ.

Ĕçе пĕтĕмпех електричествă вăйĕпе тăваççĕ. Унта пурĕ 70 рабочи ĕçлет. Октябрĕн 26-мĕшĕнче çурта 8,6 метр шутарнă.

(„Правда“).

Октябрĕн 31-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи стена хăçат редакторĕсен семинарĕ пулат

Октябрĕн 31-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, Партпрос çуртĕнче фабрик-заводсенчи, учрежденисенчи, шкулсенчи тата урам комитечĕсен стена хăçат редакторĕсене вальли çакнашкал темăпа доклад пулат:

Октябр праçникĕ тĕлне стена хăçатне мĕнле хатĕрлесе кăлармала.

Доклад тăваканĕ С. В. Карташов йулташ.

Стена хăçат редколлеги членĕсене, художниксене тата рабкорсене пыма чĕнеççĕ.

ПСК(б)П Хула Комитечĕ
„Красная Чувашия“
„Чăваш Коммунĕ“

Тÿрлетни

Октябрĕн 28-мĕшĕнче тухнă „Чăваш Коммунĕ“ хăçатăн пĕрремĕш страницăри çÿлти кĕтесре пичетленнĕ „Кунта суйлавçă килет“ статйан чиччĕмĕш абзацне çапла вуламалла:

„Суйлав комиссийĕн секретарĕ пынă çынна суйлавçăсен спискине тĕрĕслесе туса конверт тата икĕ бюллетень парат. Пĕр бюллетенĕ Союз Совечĕн депутатне суйламалли, тепри Национальнăйсен Советне суйламалли пулат“.

* *

„Чăваш Коммунĕ“ хăçатăн 243-ш номерĕнче 4-мĕш страницăра—Национальнăйсен Советне суйлас тĕлĕшпе Чăваш АССР тăрăх ĕçлекен Округсенчи суйлав Комиссийĕн составне çирĕплетесси çинчен йышăннă постановленире— Çĕмĕрле суйлав округ суйлав комиссийĕн членĕ—Иванов Алексей Михайлович—Пăрачкав районĕнчи коммунисла организацинчен тата çавăнтах Горкини Илйа Йаковлевич—Кăнтăрти тата Центрти МТС работникĕсен профессийĕ Союзĕн Чăваш организацинчен, тесе вуламалла.

* *

„Чăваш Коммунĕ“ 249-мĕш номерĕн 1-мĕш страницинче редакци айĕпĕпе сулахайри клише айне çырни йанăш пичетленсе тухнă. Ăна çапла вуламалла: „Чухновский отрйачĕнчи „Н-213“ самолет командирĕ Ф. В. Фарих“.

Ответлă редактор П. И. ИВАНОВ.

КОЛХОЗСЕНЕ

Шупашкарти Горторг договăрсем тăрăх çакнашкал ĕçсем парат:

1. Хула тăрăх тавар турттарма.
2. Красин турттарма.
3. Хула тăрăх тĕрлĕрен таварсемпе пахча-çимĕçсем турттарма.
4. Шупашкар, Тутаркас, Ишлей тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи пасарсене таварсем турттарма.

Чебторг кантурĕнче ыйтса пĕлмеле, Кадыков урамĕ, 5—12 № çурт.

2—1. ЧЕБТОРГ ДИРЕКЦИЙĔ.

ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ ПУР ГРАЖДĂНСЕНЕ тата ОРГАНИЗАЦИСЕНЕ

ЗАКАЗСЕНЕ пырса каласан, çыру тăрăх тата телефон тăрăх йышăнаççĕ

телефон № 4—53 тата 2—91

ТАВАРСЕНЕ УЙРĂМ ГРАЖДĂНСЕНЕ ÇИЙĔНЧЕХ УКÇА ТÜЛЕНИПЕ ОРГАНИЗАЦИСЕНЕ ПЕРЕЧИСЛЕНИ ТĂРĂХ ПАРАÇÇĔ.

Киле леçсе панăшăн уйрăм укçа илеççĕ

2—1

ШУПАШКАР ХУЛИНЧИ ТОРГ

магазинсем № 1 (малтан пулнă почтă айĕнче) тата № 3 (хĕрлĕ плошчĕдри дежурнăй) пур граждăнсене те апат-çимĕç таварĕсене киле леçсе пама заказсем йышăнаççĕ

Октябр революцийĕ 20 çул тултарнă йатпа пулакан вечĕрсенче, балсенче сутма буфетсем вальли тĕрлĕрен апат-çимĕç таварĕсем тăратаççĕ

Мĕн чухлĕ кирлĕ таран леçсе параççĕ

Грузире тунă ĕçĕм çырли ерехĕсене, çырла-улма ерехĕсене, Горькинчи тата Хусанти заводсенче тунă наливкăсемпе настойкăсем

Государствăлă фабрикĕсенче тунă кондитерла çимĕçсене мĕнле çурт кирлĕ çавна тăратаççĕ.

Вырăнта тунă кондитерла çимĕçсем:

тĕрлĕрен сурт печенисем, тортсем, кексасем, венски сдоба, булкăсем, тĕрлĕрен ассортимент шура çăкăрсем, кукăльсем, сухари, тулă чусти.

Çăнăх, кĕрпе, макаронсем киле леçсе пареççĕ.

ПАХЧА-ÇИМĔÇСЕМ: чĕрĕ купăста, туранă купăста, кишĕр, сухан, хĕрлĕ-кăшман, çĕрулми.

Консервăсем, повидлă, тĕрлĕрен сурт варенисем.

Заказсене вăхăтра леçсе памасан тата тĕрĕсмарлăхсем пулсан 5—54 № телефон тăрăх ыйтса пĕлĕр.

Чебторг дирекцийĕ.

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмелли хаксем: 12 уйăха — 30 т. 6 уйăха — 15 т. 3 уйăха — 7 т. 50 пус 1 уйăха — 2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене каялла памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 818. Гор. Чебоксары, типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 1923. Тираж 11156. Ф. 58—92 см. 1—1п. л.